БИБЛИОТЕКА
им. М. Горького
№

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛЕШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Ноябрь
22
ВЫРСАРНИКУН
№ 228 (9137)
Хакĕ 20 пус.
36-мĕш çул тухать.

Паян—Артиллери кунĕ

Совет халăхĕпе унăн мухтавлă Хĕçпăшаллă Вăйĕсем Артиллери кунне уявлаççĕ.

Сывă пултăр пирĕн социализмла Тăван çĕршыв!

Сывă пулччăр паттăр совет халăхĕ тата унăн мухтавлă Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Совет Правительстви!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ!

Лазарь Моисеевич КАГАНОВИЧ юлташа

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ тата ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ Сире, Ленинăн шанчăклă ученикне тата Сталинăн соратникне, Эсир утмăл çул тултарнă кун хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Совет халăхĕ Сирĕн тава тивĕçлĕ ĕçсене пысăка хурса хаклать, Эсир Коммунистсен партийĕпе Совет государствин питех те паллă организаторĕсемпе строителĕсенчен пĕри пулса тăратăр.

Партипе государствăн ĕçĕнче пур вырăнсенче ĕçленĕ чухне те Эсир пĕтĕм хастарлăхпа хăвăрăн мĕнпур вăя тата пĕлĕве ССР Союзĕнче коммунизм тăвас ĕçе паратăр.

Сире, пирĕн тус тата юлташ, пирĕн хаклă Лазарь Моисеевич, пĕтĕм чĕререн нумай çулсем хушши сывлăхлă пулма тата пирĕн социализмла Тăван çĕршыври халăхсен ырлăхĕшĕн, коммунизм ырлăхĕшĕн малалла та ăнăçлă ĕçлеме ыра сунатпăр.

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕ.

Мирлĕ ĕç хуралĕнче

Паян совет халăхĕпе унăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем Артиллери кунне уявлаççĕ. Çак куна уявласа, совет çыннисем пирĕн артиллери Аслă Отечественнăй вăрçăра ĕмĕр-ĕмĕр асра пулмалли чаплă ĕçсем тунине палăртаççĕ, мирлĕ пурăнса иксĕлми хастарлăхпа ĕçлеме, пĕтĕм тĕнчери çирĕп миршĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешме, Совет Союзĕн оборона хăватне малалла тĕреклетсе пыма яланах хатĕр тăнине тата тепĕр хут кăтартса параççĕ.

Вырăс артиллерийĕн пысăк та чаплă историйĕ пур. Россия артиллери наукипе техникине аталантарас, артиллерипе вăрçăра усă курас тĕлĕшпе яланах Хĕвеланăç Европăри çĕршывсенчен малта пынă. Хăвăрт перекен тупăсемпе минометсем, артиллерин тĕрлĕрен техникине чи малтан Российăра тума пуçланă. Анчах ылханлă патша правительстви халăха хирĕçле политика тытса пынă пирки, çавна пула çĕршыв промышленность тĕлĕшпе кая юлнă пирки кивĕ Российăра артиллери кирлĕ пек аталанма пултарайман. Октябрьти Социализмла Аслă революци çĕнтерни пирĕн çĕршывра наукăпа техникăна, вăл шутрах артиллерие аталантарма питĕ лайăх условисемпе анлă майсем туса пачĕ.

Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсен уйрăмми пайĕ тата унăн ударнăй вăйĕ пулса тăракан совет артиллерине граждан вăрçи вăхăтĕнче туса хунă. Вăл пĕрмай аталанса пынă, хамăр Тăван çĕршывăн мĕнпур тăшманĕсене хирĕç кĕрешнĕ чухне совет артиллерисчĕсем пысăк паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнă.

Совет артиллерийĕ аталанса пыни социализмла государство тĕрекленсе пынипе, совет науки чечекленсе пынипе тачă çыхăнса тăрать. Граждан вăрçипе ют çĕршывсенчи империалистсем пĕрремĕш хут тапăннине хирĕç кĕрешнĕ çулсенче тăшмана çĕнтернĕ хыççăн, совет халăхĕ мирлĕ ĕçе тытăннă. Коммунистсен партийĕн ăслă политикине пурнăçлани çĕршыв хуçалăх тĕлĕшпе кая юлнине хăвăрт пĕтерме, экономикăна хăватлăн аталантарма май панă. Пилĕк çуллăх плансене пурнăçласа вăйлă индустри туса хунă, çапла вара Совет Çарне малта пыракан çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарма май килнĕ.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви куллен-кун тăрăшнипе совет артиллерийĕ пĕрмаях аталанса пычĕ. Ăна валли çĕнĕ техника çителĕклĕ туса хатĕрленĕ, çĕнĕ техникăпа усă курма пĕлекен ăста кадрсем вĕрентсе ӳстернĕ. Пирĕн артиллери тĕнчери чи хăватлă артиллери пулса тăнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă çулĕсенче—Тăван çĕршыв ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешнĕ йывăр кунсенче — Коммунистсен партийĕ совет халăхне çĕнтерӳсем тума организацилесе, ертсе пычĕ. Вăл хавхалантарса ертсе пынипе пĕтĕм совет халăхĕ хаяр тăшмана хирĕç кĕрешме çĕкленчĕ. Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем куллен-кун тĕрекленсе пычĕç.

Активлă оборонăра тăрса çапăçнă чухне те, Совет Çарĕ наступлени тунă вăхăтра та пирĕн артиллери калама çук пысăк ĕç туса пычĕ. Мускав çывăхĕнче тăшмана хирĕç хаяррăн çапăçнă кунсенче совет гвардийĕ çуралчĕ. Артиллери чаçĕсенчен чи малтан Ефименко майор ертсе пынă полка—танксене пĕтерекен артиллери полкне гварди ятне панă. Çак полкри воинсем тăшманăн 186 танкне пĕтернĕ, вĕсене Мускав патне çитме паман.

Ленинград, Одесса, Севастополь тата ытти хуласене хӳтĕленĕ чухнехи активлă оборонăра артиллери пысăк вăй пулнă. Зенитнăй артиллери те калама çук чаплă ĕç тунă, тăшман самолечĕсен çулне пӳлнĕ, пайтах самолетсене персе ӳкернĕ.

Сталинград патĕнчи, ун хыççăн Курск патĕнчи историллĕ çапăçусенче, 1944 çултан пуçласа Совет Çарĕсем пĕтĕм фронт сарлакăшпе туса пынă наступленире, юлашкинчен Берлина илессишĕн пулнă çапăçура совет артиллерийĕ тăшмана пĕтерекен тĕп вăй пулса, ытти йышши çарсем валли çул уçса пынă. Артиллеристсен паттăр ĕçне Тăван çĕршыв пысăка хурса хакларĕ. Çĕршер пин артиллериста Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. Вĕсенчен 1.800 çын Совет Союзĕн Геройĕ ятне илме, уйрăмах хăюллă та паттăр артиллеристсем—А. П. Шилин тата В. С. Петров Совет Союзĕн Геройĕ ятне икĕ хут илме тивĕçлĕ пулнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă совет халăхĕ историллĕ çĕнтерӳ тунипе вĕçленчĕ. Ун хыççăн пирĕн халăх мирлĕ строительствăна тытăнчĕ те ку ĕçре те çĕнтерӳ хыççăн çĕнтерӳ туса пырать. Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем, вĕсен составĕнчи артиллеристсем социализмла государствăн интересĕсене, мирлĕ ĕçе сыхă хуралласа тăраççĕ. Совет воинĕсем хăйсен çар ăсталăхне, политикăлла пĕлӳсене ывăнма пĕлмесĕр ӳстерсе пыраççĕ.

Пирĕн тăван Совет правительстви мирлĕ политика тытса пырать. Совет Союзĕ тĕнчери миршĕн, демократишĕн, социализмшăн кĕрешекен хăватлă лагере ертсе пырать. Çав вăхăтрах совет çыннисем социализмла Тăван çĕршывăн оборона хăватне ӳстерсе пымаллине те пĕр самантлăха та манмаççĕ.

«Совет Союзĕ мир политикине яланах çирĕп пурнăçа кĕртсе пынă тата малашне те пурнăçа кĕртсе пырĕ,—тесе каларĕ Г. М. Маленков юлташ ССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче. — Совет Союзĕ никам çине те тапăнма шутламасть. Агрессиллĕ шухăшсем уншăн ют. Çакна мĕнпур çĕршывсенчи халăхсем шанса тăма пултараççĕ.

Çапах та, мир ĕçĕшĕн çине тăрса кĕрешсе, пирĕн çав вăхăтрах аслă Совет Союзĕн оборонине ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетсе лайăхлатас тĕлĕшпе хамăрăн чи таса тивĕçе çирĕп асра тытмалла. Кам та пулин, ăсран тухса, пирĕн Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне пăсма хăтланасран сыхланма эпир çавăн пек туча тивĕç. Вăрçă кăларакан тĕрлĕ авантюристсемпе провокаторсен вĕри пуçĕсене сивĕтме тата вĕсене социализмла çĕнтерӳсене, Совет Союзĕн вăй-хăватне хисеплеме вĕрентме совет çыннисен кирек хăçан та хатĕр пулмалла».

Совет халăхĕ пилĕк çуллăх плана, Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе Совет правительстви ялхуçалăхне, халăха куллен кирлĕ таварсемпе апат-çимĕç туса кăларакан промышленноçа хăвăртрах малалла аталантарма йышăннисене пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет. Хуçалăхри çитĕнӳсен никĕсĕ çинче пирĕн халăхăн пурнăçĕ малашне тата ытларах лайăхланса пырĕ. Çакна тума кашни предприятире, кашни колхозпа совхозра çĕнĕ çитĕнӳсем тăвассишĕн социализмла ăмăртăва анлăн сарса пыни кирлĕ.

Артиллери кунне уявласа, совет çыннисем Тăван çĕршывăн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене, артиллеристсене тата артиллери промышленноçĕн работникĕсене хисеп тăваççĕ, вĕсене хăйсен пысăк задачисене ăнăçлă пурнăçласа пыма ыра сунаççĕ.

Мирлĕ пурнăçăн шанчăклă хуралçине—Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсене мухтав та хисеп!

М. СОЛОВЬЕВ художник плакачĕ. (ТАСС фотохроники).

ССР Союзĕн Оборона Министрĕн ПРИКАЗĔ

1953 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕ. № 100. Мускав хули.

Юлташсем—артиллеристсемпе артиллери промышленноçĕн работникĕсем!

Юлташсем—салтаксемпе матроссем, сержантсемпе старшинасем!

Юлташсем—офицерсем, генералсемпе адмиралсем!

Паян совет воинĕсем хамăрăн пĕтĕм халăхпа пĕрле Артиллери кунне паллă тăваççĕ.

Сире Артиллери кунĕ ячĕпе саламласа сывлăх сунатăп тата совет артиллерине аталантарас ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума ыра сунатăп. Пирĕн артиллеристсен тата артиллери промышленноçĕнче ĕçлекен мĕнпур работниксен задачи совет артиллерийĕн боевой хатĕрлĕхне çине тăрса ӳстерсе пырасси, артиллери техникипе хĕçпăшалне малалла лайăхлатасси, социализмла государствăн оборона хăватне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетсе пырасси пулать.

Артиллери кунне паллă туса, çапла **приказ паратăп:**

Паян, 1953 çулхи ноябрĕн 22-мĕшĕнче, пирĕн Тăван çĕршыв столицинче—Мускавра тата союзлă республикăсен столицисенче артиллери тупписенчен çирĕм хут пĕр харăс персе салют памалла.

Сывă пулччăр совет артиллерисчĕсем тата артиллери промышленноçĕн работникĕсем!

Сывă пулччăр паттăр совет халăхĕ тата унăн мухтавлă Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ!

Сывă пултăр Совет Правительстви!

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ!

ССР Союзĕн Оборона Министрĕ
Совет Союзĕн Маршалĕ Н. А. БУЛГАНИН.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

ХУСАН ЧУГУН ÇУЛĔН ЧĂВАШ АССР-ри КĔРЕКЕН ШКУЛĔСЕНЧИ УЧИТЕЛЬСЕНЕ МЕДАЛЬСЕМПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1948 çулхи февралĕн 12-мĕшĕнче кăларнă Указпа килĕштерсе, нумай вăхăт хушши лайăх ĕçленĕшĕн çаксене наградăлас:

«ĔÇРИ ХАСТАРЛĂХШĂН» МЕДАЛЬПЕ

Иван Петрович Листочкина—5-мĕш вăтам шкулти учителе.

«ĔÇРЕ ПАЛĂРНĂШĂН» МЕДАЛЬПЕ

Мария Ивановна Водоватовăна—13-мĕш вăтам шкулти учительницăна.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль.
1953 çулхи ноябрĕн 5-мĕшĕ.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

ЧĂВАШ АССР ÇĂМĂЛ ТАТА АПАТ-ÇИМĔÇ ПРОМЫШЛЕННОСТЬ МИНИСТЕРСТВИНЕ ÇĔНĔЛЛЕ ЙĔРКЕЛЕСЕ ЧĂВАШ АССР АПАТ-ÇИМĔÇ ТАВАРĔСЕН ПРОМЫШЛЕННОСТЬ МИНИСТЕРСТВИ ТУСА ХУРАССИ ÇИНЧЕН

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Чăваш АССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерствине çĕнĕлле йĕркелесе Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерстви туса хурасси çинчен панă сĕнĕве çирĕплетес.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. ТАРАСОВ.

РСФСР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ И. ЗИМИН.

Мускав, 1953 çулхи ноябрĕн 16-мĕшĕ.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Указĕ

П. И. КАЛИНКИНА ЮЛТАША ЧĂВАШ АССР АПАТ-ÇИМĔÇ ТАВАРĔСЕН ПРОМЫШЛЕННОСТЬ МИНИСТРĔ ПУЛМА УЙĂРСА ЛАРТАССИ ÇИНЧЕН

Прасковья Ивановна Калинкина юлташа Чăваш АССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министрĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕшĕн Д. МИТЬКОВ.

Шупашкар хули,
1953 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн УКАЗĔ

Л. М. Каганович юлташа Ленин орденĕпе наградăласси çинчен

СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн пĕррелĕш заместителĕ Л. М. Каганович юлташ çуралнăранпа утмăл çул тултарнă май тата вăл Коммунистсен партийĕпе Совет халăхĕ умĕнче питех те паллă тава тивĕçлĕ ĕçсем тунине шута илсе, Лазарь Моисеевич Каганович юлташа Ленин орденĕпе наградăлас.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ К. ВОРОШИЛОВ.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Секретарĕ Н. ПЕГОВ.

Мускав, Кремль. 1953 çулхи ноябрĕн 21-мĕшĕ.

Хамăр республикăра

Суту-илӳ работникĕсен канашлăвĕ

КАНАШ. Çак кунсенче районти суту-илӳ работникĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура суту-илӳ работникĕсемпе пĕрле КПСС райкомĕпе райсовет исполкомĕн представителĕсем, финанспа ялхуçалăх работникĕсем тата промысла артелĕсемпе районти ытти организацисен руководителĕсем пулчĕç. Вĕсем КПСС Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ советла суту-илĕве малалла вăйлатса пырас ыйтусем тăрăх йышăннă постановленисем çинчен, районти колхозсемпе ялсенче суту-илӳ ĕçне лайăхлатас задачăсем çинчен сӳтсе яврĕç.

Партипе правительство советла суту-илĕве малалла вăйлатса пырас тĕлĕшпе йышăннă постановленисене пурнăçлама канашлу участникĕсем хăйсем çине социализмла обязательствăсем илчĕç.

Районти колхозсемпе ялсенче суту-илӳ ĕçне малалла сарса тата вăйлатса пырас тĕлĕшпе кăçал чылай ялсенче çĕнĕ магазинсемпе лавккасем лартаççĕ.

Çавăн пекех канашлăва пухăннă суту-илӳ работникĕсем ĕççыннисене валкăн сутмалли тавар çаврăнăш планне кăçал 120 процентран кая мар тултарма сăмах пачĕç.

(Хамăр инф.).

Колхозсене ĕçлеме кайрĕç

СĔНТĔРВĂРРИ. Коммунистсен партийĕ чĕннипе агрономсем колхозсене ĕçлеме кайма кăмăл тăваççĕ. Машина-трактор станцийĕ колхозсене 19 специалист, вăл шутра 11 агроном, 8 зоотехник ячĕ. Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕнчи зоотехник пулнă И. Ериков юлташ «Правда» колхозра ĕçлеме тытăнчĕ. Агрономсем Ф. Григорьева юлташ Калинин ячĕпе тăракан колхоза, У. Кормильцева юлташ «Родина» колхоза ĕçлеме кайнă.

М. ТИТОВ.

Министерствăсемпе ведомствăсенче

Врачсем яла ĕçлеме каяççĕ

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановленине хаклаланса, Шупашкарта ĕçлекен уйрăм врачсемпе медицина сестрисем Чăваш АССР Сывлăх министерствине ялта ĕçлеме яма ыйтса заявленисем параççĕ.

Сосновка посёлокĕнчи больницăри врач-хирург В. Васильев юлташ хăйне Элĕк районне яма ыйтса заявлени панă. Вăл çапла çырать:

«КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен йышăннă постановление хăвăртрах пурнăçлассишĕн тăрăшса ĕçлеме кăмăл туса, эпĕ мана ялта ĕçлеме яма ыйтатăп. Манăн специальность колхозниксен пурнăçне лайăхлатма тата сывлăхне тĕреклетме, вĕсене ăнăçлăн ĕçлекенсем тума пулăшассине шанатăп. Çапла майпа эпĕ ялхуçалăхне аталантарас ĕçе хутшăнма пултаратăп».

Чăваш АССР Сывлăх министерствинче Васильев юлташăн заявленине пăхса тухнă, ăна Элĕк районĕнчи больницăра врач-хирург пулса ĕçлеме янă.

Ялта ĕçлеме яма ыйтса П. Романов юлташ заявлени панă. Вăл врач-хирург, Хусанти медицина институтĕнчен вĕренсе тухнă, халĕ Сывлăх министерствинче кадрсем енĕпе аслă инспектор пулса ĕçлет.

Трахоматознăй институтри медицина сестри Ю. Петрова юлташ хăйĕн заявленийĕнче Çĕрпӳ районĕнчи фельдшер пунктĕнче ĕçлеме яма ыйтать.

Шкул директорĕсен курсĕ

Чăваш АССР Çутĕç министерствипе Учительсен пĕлĕвне ӳстерес енĕпе ĕçлекен институт çичĕ çул вĕренмелли шкулсен директорĕсен 20 кунлăх курсĕсене ирттереççĕ.

Малтанхи хут курсра вĕренме 103 директор пухăннă. Вĕсем октябрĕн 12-мĕшĕнчен пуçласа 31-мĕшĕччен вĕреннĕ.

Ноябрĕн 10-мĕшĕнче курсра вĕренме шкул директорĕсен иккĕмĕш ушкăнне пухнă. Унта 100 çынна яхăн килнĕ.

Курсра шкул директорĕсем валли марксизм-ленинизм теорийĕ тата педагогика ыйтăвĕсем тăрăх лекцисем вулаççĕ. «Шкул директорĕн ĕçĕ», «Шкулсен программисене пăхса тухни» темăсемпе теориллĕ лекцисем итленипе пĕрлех, практикăлла задачăсемпе тата политехникăлла вĕренĕве мĕнле йĕркелессипе паллашаççĕ. Директорсем Шупашкарти шкулсенче опытлă учительсен урокĕсенче, физика кабинечĕсенче пулаççĕ.

Финанс работникĕсен ăсталăхне ӳстереççĕ

Чăваш АССР Финанс министерстви районсенчи нумай ачаллă амăшĕсемпе пĕччен ача амăшĕсене пособи паракан пайсен аслă инспекторĕсемпе аслă бухгалтерсен виçĕ уйăхлăх курсне организациленĕ.

Асăннă курс Канашри финанс техникумĕ çумĕнче ĕçлет. Унта 25 çын вĕренет. Вĕсене декабрĕн 15-мĕшĕ тĕлне вĕрентсе кăлараççĕ.

Çитес çулхи вăйлă тырпулшăн

КОЛЬЦОВКА. Сталин ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ колхоз, кăçалхи ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçленипе пĕрлех, çитес çулхи вăйлă тырпулшăн кĕрешет.

Хальхи вăхăтра колхозниксем уй-хире тислĕк кăлараççĕ.

Октябрь уйăхĕнче колхоз ячĕпе 5 вагон азотлă тата фосфорлă удобренисем килсе çитнĕ. Минераллă удобренисене тӳрех уй-хире турттарса хураççĕ. Унта вĕсене ятарласа тунă ещĕксенче сыхласа усраççĕ.

Н. ЛЕОНИДОВ.

Колхозниксем зоотехникăна вĕренеççĕ

ШĂХАСАН. Сталин ячĕпе тăракан колхозра зоотехника курсĕ ĕçлет. Курсра 20 колхозник вĕренет. Вĕсем пурте занятисене пĕр сиктермесĕр çӳреççĕ.

Зоотехник Е. Кузьмина юлташ занятисене яланах палăртнă кун ирттерет.

Курсра 4 заняти пулнă.

Г. ЛУЧ.

Тупăш ӳссех пырать

КРАСНОАРМЕЙСКИ. Ленин ячĕпе тăракан колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана çулсерен тултарса пырать. Колхоз уйрăмах сыснасем ĕрчетес, вĕсенчен илекен тупăша ӳстерес тĕлĕшпе чылай ӳсĕмсем турĕ. 1952 çул пуçламăшĕнче фермăра 228 сысна пулнă. 1953 çулхи январьте 259 пуçа çитнĕ. Халĕ 262 сысна усраççĕ. Çапла вара, плана 110 процент тултарнă.

Колхоз государствăна аш-какай памалли обязательствăн пысăк пайне сыснасем парса пурнăçлать. Кунсăр пуçне, колхоз планран ытлашши сысвасене колхоз членĕсене тата пасарсене илсе тухса сутать. Кăçал колхоз сысна ферминчен 60 пин тенкĕ тупăш илчĕ.

А. ПЕТРОВ.

Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ўстерес тата вĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе туса ирттермелли ĕçсем çинчен

СССР Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министрĕ В. П. ЗОТОВ юлташ апат-çимĕç таварĕсен промышленность работникĕсен Пĕтĕм Союзри канашлăвенче кăçалхи октябрĕн 31-мĕшĕнче тунă доклад)*

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх ырлăхĕшĕн, унăн пурнăç шайне лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшаççĕ. Йывăр промышленноçа аталантарнă никĕс çинче пирĕн çĕршывра халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине хăвăрт вăйлатас ĕçе организацилемелле кирлĕ пур условисене те туса панă.

Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пиллĕкмĕш сессийĕнче çапла кăтартса пачĕ: халăха кирлĕ таварсем туса кăларассине татăклăн ўстерес ĕçе пурнăçлама, чи малтан, халăха—апат-çимĕç, çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне—чĕртавар парса тăракан ялхуçалăхне хăвăрттăн çĕклентерме кирлĕ ĕçсем туса ирттермелле.

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ Н. С. Хрущев юлташ докладĕ тăрăх «ССР Союзĕн ялхуçалăхне малалла аталантармалли мерăсем çинчен» постановлени йышăнчĕ. Çак постановленире хальхи вăхăтра ялхуçалăхĕ мĕнле тăнине объективлă хак панă, пысăк çитменлĕхсем, уйрăмах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртнă. КПСС Центральнăй Комитечĕн Пленумĕ ялхуçалăхне малалла аталантарас тĕлĕшпе вăраха ямасăр туса ирттермелли ĕçсен программине çирĕплетрĕ Çакă вăл апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине татăклăн ўстермелли çирĕп никĕс туса хума май парать.

Юлашки çулсенче пирĕн çĕршывра апат-çимĕç таварĕсем туса кăларасси чылай ўсрĕ. Кăçалхи çул вĕсене туса кăларасси, тĕслĕхрен, 1950 çулхипе танлаштарсан, 41 процент ытла ўсет. Анчах та апат-çимĕç таварĕсем туса кăларас ĕçĕн пысăкăшĕпе хăвăртлăхĕ хальхи вăхăтра халăхăн материальнăй пурнăçне хăвăртрах лайăхлатас тата культурăллă шайне ўстерес задачăна пурнăçлама çитеймĕсĕр-ха. Апат-çимĕç промышленность отраслĕсен нумай предприятийĕсем çаплах совет потребителĕн ыйтăвĕсене тивĕçтерме пултарайман продукци туса кăлараççĕ, çав продукцисен пахалăхĕ çитеймĕсĕр-ха.

1953 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕнче СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ «Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ўстересси тата вĕсен пахалăхне лайăхлатасси çинчен» постановлени йышăнчĕç. Çак постановлени апат-çимĕç промышленноçĕн мĕнпур отраслĕсене малалла хăвăрт аталантарнипе халăха массăллăн кирлĕ продуктсем туса кăларас тĕлĕшпе пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план заданийĕсене срокчен маларах тултарма пысăк майсем туса парать. 1955 çулта апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине, 1950 çулхипе танлаштарсан, пилĕк çуллăх план тăрăх 71,4 процент ўстерме палăртнă пулсан, 84,7 процент ўстермелле тунă. Çакăнпа пĕрлех паллăрах таварсем туса кăларас тĕлĕшпе 1956 çулхи заданисене ўстернĕ.

Партипе правительство апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ўстерме тата вĕсен пахалăхне лайăхлатма палăртнă программăна пурнăçлани çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче халăха аш-какай тата аш-какай продукчĕсем, пулă тата пулă продукчĕсем, çу, сахăр, кондитерски изделисем, консервсем тата ытти апат-çимĕç парса тивĕçтерессине татăклăн ўстерме май парать. Апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕн кашни отраслĕ умне пысăк та конкретлă задачăсем кăларса тăратнă.

Аш-какай тата аш-какай продукчĕсем туса кăларассине чылай ўстермелле

Аш-какай промышленноçĕн аш-какай туса кăларассине 1954 çулта 74 процент, 1955 çулта—икĕ хут тата 1956 çулта, 1950 çултипе танлаштарсан, 2,4 хут ўстермелле. Паха йышши аш-какай продукчĕсем, сăмахран, кайăк-кĕшĕк аш-какайĕ, копченăй колбаса, копченăй сысна аш-какайĕ, сосискăсем тата ыттисем туса кăларасси нумай ўсет. Чĕркесе сутакан аш-какай, пĕçерме хатĕрленĕ аш-какай, котлетсем, пельменьсем чылай нумайтарах туса кăлармалла пулать, çакă вăл киз хуçалăхĕнчи ĕçе çăмăллатма пулăшать.

Аш-какай промышленноçĕн работникĕсем умĕнче, çавăн пекех апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕн ытти отраслĕсем умĕнче те, аш-какай продукчĕсен пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк задача тăрать Çак задачăна выльăхсене çитерсе самăртас ĕçе малалла лайăхлатнипе тата производствăра технологи ĕçĕсене лайăхлатнипе татса памалла.

1954 çулта кайăк-кĕшĕк аш-какайĕ туса кăларасси 75 пин тоннăна, 1955 çулта—105 пин тоннăна çитет. 1955 çулта паха сортлă кайăк-кĕшĕк аш-какайĕ туса кăларасси 50 процентран кая мар пулмалла. Кайăк-кĕшĕке çитерсе самăртас ĕçĕн техникăлла никĕсне вăйлатмалла тата кайăк-кĕшĕк аш-какайĕ хатĕрлекен предприятисен производствăлла хăватне чылай ўстермелле пулать.

Аш-какай консервĕсен пахалăхĕпе ассортиментне лайăхлатасси çине тимлĕн пăхмалла пулать. Промышленноçăн консервсем туса кăларассине пĕтĕмĕшлĕн кăна ўстермелле мар, вĕсен ассортиментне чылаях лайăхлатмалла, ваккăн сутакан паха йышши аш-какай консервĕсем, сăмахран, паштет, чĕлхе, фарш, чăх-какай, ветчина консервисем туса кăларассине анлăн аталантармалла.

Аш-какай промышленноçне çĕклентерес ĕçре хальхи предприятисене техника енĕпе малалла хĕçпăшаллантарса пыни. уйрăмах выльăх-чĕрлĕхе пусса хатĕрлес, çу шăратас, субпродуктсем хатĕрлес ĕçсен механизаци шайне ўстерни пысăк вырăн йышăнса тăрать. 1954 çулта выльăх-чĕрлĕх хатĕрлесси 1950 çулхи шайран 85 процент иртет. Малашнехи çулсенче вăл тата ытларах ўсет. Кунта тата çакна шута илес пулать: 1954 çултан пуçласа выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене государство енĕпе сутăн илес ĕçе пĕтĕмпех Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерстви системине параççĕ. 1954 çулта пирĕн выльăх-чĕрлĕх 1952 çулхинчен пилĕк хут ытларах сутăн илмелле пулать. Çак задачăна йăнăçлăн пурнăçлас тесен хатĕрлев организацийĕсен руководителĕсен хăйсен аппаратне тĕреклетес пулать, колхозсемпе тата выльăх-чĕрлĕх сутакан ытти хуçалăхсемпе тачăрах çыхăну тытас пулать.

Çакăнпа пĕрлех выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк усрамалли çуртсене чылай аслăлатмалла, çавăн пекех выльăх апачĕ туса хатĕрлес ĕçе пур майсемпе те лайăхлатмалла. Промышленность каяшĕпе выльăхсене самăртас ĕçе пирĕн лайăх йĕркелемелле пулать. Çак çăлкуçĕпе пысăк пахалăхлă аш-какай туса илме пĕлсе усă курас пулать. Çакăн пек тăвас тесен спирт завочĕсем, сахăр завочĕсем, çу тата экстракт завочĕсем çумĕнче выльăхсене çитерсе самăртмалли çĕнĕ пунктсем тăвас пулать, çавăн пекех хальхи пунктсене те аслăлатас пулать. Çапла тунипе промышленность предприятийĕсенче пулакан жом, пăрака тата ытти каяшсемпе туллин усă курас пулать.

Çакна палăртни кирлĕ: аш-какай промышленноçĕн ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха, кунта çаплах тĕрлĕ «ансăр» вырăнсем нумай тĕл пулаççĕ Çакна калани те çителĕклĕ: 13 аш-какай комбиначĕнче кăна сурăх ашĕ хатĕрлеме ятарласа линисем тунă. Нумай аш-какай комбиначĕсенче шăнтмалли хатĕрсен хăвачĕ çителĕксĕр.

Хальхи вăхăтра аш-какай комбиначĕсене выльăх-чĕрлĕх массăллăн пырса тăрать. Аш-какайпа кайăк-кĕшĕк продукчĕсем хатĕрлекен промышленность предприятийĕсен пурин те тенĕ пекех чĕртавар çителĕклĕ. Анчах та Нальчикри, Ртищеври, Мелитопольри, Ворошиловградри аш-какай комбиначĕсем, Донецки, Ростов, Краснодар, Сталинград аш-какай тресчĕсем тата Алтай кайăк-кĕшĕк тресчĕ выльăх-чĕрлĕхпе кайăк-кĕшĕк продукчĕсем туса кăларас тĕлĕшпе ĕлкĕрсе пыраймаççĕ.

1953 çулхи плана пурпĕрех пурнăçлама, аш-какай промышленноçне малалла вăйлатма мĕнпур пек техникăлла майсемпе усă курмалла, çак ĕçсене пурнăçлама аш-какай промышленноçĕнче ĕçлекен работниксен мĕнпур нумай пинлĕ коллективне мобилизацилемелле.

Пулă промышленноçĕ юлса пынине пĕтермелле

Çĕршывра апат-çимĕç таварĕсем питĕ нумай тăвас задачăна пурнăçлас ĕçре пулă промышленноçĕ пысăк вырăн йышăнать. Хальхи вăхăтра çак промышленность юлса пыракан отрасль пулса тăрать. Унăн çакăр главнăй управленийĕнчен кăçал иккĕшĕ çеç—Каспи тата Камчатка бассейнĕсенчи главнăй управленисем çеç пулă тытмалли тăхăр уйăхри плана тултарнă.

Пулă промышленноçĕ юлса пынине пĕтерессин—чи пысăк задачăсенчен пĕри, ăна пирĕн вăраха ямасăр татса памалла. Пулă промышленноçĕнче ĕçлекенсен пулă тытассине татăклăн ўстермелле. 1950 çулхипе танлаштарсан, пулă тытассине 1954 çулта 56 процент, 1955 çулта—83 процент. 1956 çулта—2,1 хут ўстермелле. 1955 çулта 20.1 миллион центнер таран пулă продукци туса кăлармалла. Уйрăмах лайăх ассортиментлă — тăварламасăр шăнтнă, тăварсăртарах, копченăй тата ытти йышши пулăсем туса кăларасси çине тимлĕ пăхмалла.

Çакна манма юрамасть: пирĕн тăварлă продукци туса кăларассине пĕтĕмĕшпе çеç ўстермелле мар, пысăк пахалăхлă пулă продукчĕсем туса кăлармалла тата вĕсен ассортиментне нумайлатмалла. Çакна калани те çителĕклĕ: 1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, тăварламасăр шăнтнă пулă 2,3 хут, тăварланă сельдь—2,7 хут ытларах туса кăлармалла, копченăй, тинĕтнĕ пулă тата балыксем туса кăларассине. 1950 çулхипе танлаштарсан, 178 процента çитермелле Хура тата хĕрлĕ вăлча туса кăларассине чылай ўстермелле; суту-илў предприятийĕсене вăлчана, рынок ыйтнă чухлĕ, ваккăн висе-висе пĕчĕк банкăсем ăшне хурса тăратмалла.

1955 çулта пулă консервисем туса кăларасси 3 хут ўсет. Тĕслĕхрен, лососевăй консервсем туса кăларасси 3,9 хут. шпрот—3.8 хут, треска пĕверĕнчен тунă питĕ тутă тытакан консервсем туса кăларасси—3.6 хут ўсет.

Пулă промышленноçĕ вĕтĕ пулă: килька, салака, хамса тата тюлька нумай тытать. Анчах хальхи вăхăтра çав вĕтĕ пулăсенчен лайăх ассортиментлă продуктсем туса кăларас тĕлĕшпе япăх ĕçлеççĕ. Çавăнпа асăннă йышши пулăсенчен консервсем, паштетсем, шăнтнă тата копченăй продуктсем туса кăларассине мĕн май килнĕ таран ўстерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Пулă промышленноçĕ умĕнче тăракан пысăк задачăсем Баренц тинĕсĕнче Шурă тинĕсре тата Инçетри Хĕвелтухăçĕнче пулă тытмалли çĕнĕ районсемпе усă курма, пулă тытас тата [illegible]сатса тăварлас ĕçе тата ытларах механизацилеме хушаççĕ. 1956 çулта пулă тытас ĕçе 80 процент таран механизацилемелле. 1953 çулта 67 процент механизациленĕ. Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче [illegible] тытакан, пулă йышăнса турттаракан рефрижераторнăй тата ытти йышши флота чылай вăйлатмалла.

СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ йышăннă тăрăх, пулă промышленноçĕнчи предприятисен производство хăвачĕсене ўстерес тата вĕсене ытларах хĕçпăшаллантарас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттеретпĕр. 1956 çул вĕçленнĕ тĕле пулă консервĕсем тăвакан предприятисен хăвачĕ, 1953 çулхипе танлаштарсан, 1,7 хут ўсмелле, сыран хĕрринчи холодильниксен хăвачĕ—2 хут, сыран хĕрринчи холодильниксен пулă шăнтакан хатĕрĕсен хăвачĕ, 1953 çулхипе танлаштарсан, 2,7 хут ўсмелле.

Пулă тасатса тăварлас, консервсем тăвас, тара ăшне хурас ĕçсене комплексла механизацилесси анлă сарăлать.

Пулă тытас ĕçре пулă тытакан колхозсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Кăçал правительство пулă тытакан колхозсен хисепне ўстерме тата вĕсене пулă ытларах тытма лайăхрах майсем туса пама питĕ кирлĕ решени йышăнчĕ. Партипе правительство пулă тытакан колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тĕреклетме, пулăçă-колхозниксене пулă ытларах тытма хавхалантарма пулăшакан мероприятисем йышăнчĕç. Вĕсене пирĕн çине тăрса пурнăçламалла.

Пирĕн хаклă йышши пулăсен (осетр, лосось йышши, судак, сазан, çупăх т. ыт.) запасĕсене нумайлатма тăрăшмалла. Пулă ĕрчетес тĕлĕшпе уйрăмах Азов, Каспи тинĕсĕсен, çавăн пекех Амур, Камчаткăри, Прибалтикăри, Çĕпĕрти юханшывсемпе пысăк шыв хранилищисен бассейнĕсенче пысăк ĕçсем туса ирттермелле.

Советсен вырăнти органĕсен колхозсемпе совхозсен пĕвисемпе кўллисенче пулă нумай ĕрчетес тĕлĕшпе тивĕçлĕ ĕçсем туса ирттермелле. Ăна пурнăçлани çĕршер пин центнер хаклă пулă хушса пама пултарать.

Сахăр промышленноçĕн ĕçĕ çинчен

КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕн постановленийĕнче палăртнă ĕçсем сахăр промышленноçне аталантарма чĕртанарăн çирĕп никĕсне тума май параççĕ.

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тăрăх сахăр песокĕ туса кăларасси 1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 78 процент ўсмелле. Правительствăпа парти палăртса панă çĕнĕ задани промышленноçа сахăр тата та нумайрах туса кăларма хушать. Сахăр песокĕ туса кăларасси 1955 çулта 1950 çулхи шайран 190 процент ытларах пулмалла. Рафинад-сахăр туса кăларасси 2,2 хут. вăл шутра пачкăсене чĕркени—7,8 хут тата пĕчĕк пакетсене чĕркени—16 хут ўсет. 1956 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, сахăр песокĕ туса кăларасси 2,1 хут, рафинад-сахăр туса кăларасси—2,6 хут ытларах пулать.

Продукци туса кăларассине çавăн пек ўстерес тесен, хальхи сахăр завочĕсене çĕнетсе урăхлатас тата çĕнĕ заводсем тăвас тĕлĕшпе, çавăн пекех механизацие анлăн аталантарас тата çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле.

Кăшман акакан тĕп районсенче кăçал сахăр кăшманне массăллăн кăларас ĕçе йăнăçлă ирттернĕ тата предприятисем сахăр туса кăларма лайăхрах хатĕрленнĕ. Кировоград тресчĕ йăнăçлă ĕçленипе тата çĕршыва планран ирттерсе сахăр нумай пама обязательство илнĕ Киев облаçĕнчи Тальноври завод коллективĕн паха пуçарăвне палăртас пулать.

Анчах хăшпĕр предприятисем кăçал çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Вĕсен шутне, уйрăммăн илсен. Курск тресчĕн сахăр завочĕсем кĕреççĕ. Талăкра сахăр туса кăлармалли плана тултарман хушăрах сахăра нумай тăккалаççĕ тата топливо ытлашши çунтараççĕ. Уйрăмах Дмитро-Тарановри, Кировскри, Буденновскри, Льговри, Ново-Таволжанри тата ытти заводсем начар ĕçлеççĕ. Полтава тресчĕн нумай завочĕсем питех те юлса пыраççĕ. Юлса пыракансен шутне Житомир тресчĕн Андрушево заводне те кĕртмелле.

Юлса пыракан заводсен директорĕсем, трестсен управляющийĕсем тата главк ĕçри пысăк çитменлĕхсене çитес сывăх кунсенчех пĕтерме мерăсем йышăнма тивĕçлĕ тата кашни сахăр завочĕн 1953 çулхи плана хисеп тĕлĕшпе те, пахалăх кăтартăвĕсем тăрăх та тултармалла тăвас пулать.

Халăх валли çу, сыр тата сĕт продукчĕсем ытларах парар

Партипе правительство çу тата сĕт продукчĕсен—çитĕннĕ халăхăн, уйрăмах ачасен апачĕн чи кирлĕ продукчĕсен—производствине вăйлатассишĕн нумай тăрăшаççĕ.

Сĕт продукчĕсем туса кăларасси 1954 тата 1955 çулсенче чылай ўсет. Выльăх çăвĕ туса хатĕрлесси 1955 çулта 1950 çулхи шайран 76 процент, сыр—2,8 хут, çăралатнă сĕт—3,4 хут ўсмелле. Хаймине уйăрман сĕт продукчĕсем туса кăларасси 1955 çулта 1950 çулхинчен 2,4 хут ўсмелле.

1956 çулта выльăх çăвĕ 650 пин тонна таран туса кăларма, урăхла каласан, 1950 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут, тата сыр—160 пин тонна таран, е 1950 çулхипе танлаштарсан, 3,3 хут ўстерме палăртнă.

Продукцин ассортиментне тата пахалăхне лайăхлатас енĕпе хăвăрт улшăну тума кирлĕ. Сăмахран, тăварсăр усламçу туса кăларассине 1954 çулта, 1953 çулхипе танлаштарсан, 30 процент тата 1955 çулта—50 процент ўстерме тивет. Малтанах висçе чĕркенĕ усламçăва промышленность 1954 çулта 1953 çулхинчен икĕ хут ытла, 1955 çулта вара—2,5 хут ытла памалла. Сĕт, кефир тата ытти сĕт продукчĕсем туса кăларасси те чылай ўсет. 1955 çулта мороженăй туса кăларасси, 1950 çулхипе танлаштарсан, 2,5 хут ўсмелле.

Сĕт промышленноçĕ умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме халĕ ĕçлекен предприятисен хăватне çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртнипе пысăклатмалла, çав тĕллевпех çĕнĕрен пине яхăн çу çапакан, сыр хатĕрлекен, сĕтрен консервăсем тăвакан тата сĕт завочĕсем, сыр усрамалли пысăк хранилищĕсем тата холодильниксем лартас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттермелле. Çу тата сыр хатĕрлекен тĕп районсенче 1954—1956 çулсенче предприятисене механизацилесе çитермелле.

Калас пулать, промышленноçăн сĕт отраслĕн предприятийĕсем 1953 çулхи плана тултарас тĕлĕшпе чăтма çук кая юлчĕç. Сĕт хатĕрлес ĕçе начар организацилени пула чылай районсенче кăçалхи тăхăр уйăх хушшинче çу, сыр тата ытти продуктсем нумай парса çитермен Уйрăмах Курск тресчĕн (управляющийĕ Иванов юлташ), Сталинград тресчĕн (управляющийĕ Балахонов юлташ). Тамбов тресчĕн (управляющийĕ Сенчаков юлташ) предприятийĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ Ĕçе тĕпренех лайăхлатас пулать. Сĕт хатĕрлемелли тата ăна закуп йĕркипе илмелли плана, кăтартса панă ассортимент тăрăх, çу, сыр тата ытти продуктсем туса кăлармалли плана тултарма тата вĕсен пахалăхне лайăхлатма кирлĕ условисем пирĕн пурте пур.

Çавăн пекех ўсентăран çăвĕпе маргарин туса кăларассине ўстерес тĕлĕшпе те пысăк ĕçсем туса ирттерме палăртнă. Ўсентăран çăвне туса кăларасси 1955 çулта 1950 çулхи шайран 92 процент иртсе каймалла, малтан, пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх планпа 77 процент ўстерме палăртнă пулнă. 1956 çулта ўсентăран çăвĕ туса кăларасси, 1950 çулхипе танлаштарсан, 2,1 хут ўсмелле. Промышленноçăн çак отраслĕ умĕнче те ассортимента, пахалăха лайăхлатас тата продукцие савăт-сапасене тултарса кăларассине ўстерес задачăсем тăраççĕ.

Ўсентăран çăвне туса кăларассине ўстересси çу кăларма илекен вăрăсен пахалăхĕпе тўрремĕнех çыхăнса тăрать Правительство çу кăларма пысăк пахалăхлă хĕвелçаврăнăш панăшăн колхозсене, колхозниксене тата совхозсене хавхалантарас майпа вĕсене тўлемелли çĕнĕ йĕрке тунă. Хĕвелçаврăнăшĕн лайăх пахалăхлă çу тухакан сорчĕшĕн хатĕрлев хакĕсем çумне 50 процент хушса тўлеççĕ. Центросоюза колхозсемпе колхозниксенчен хĕвелçаврăнăшĕн лайăх пахалăхлă çу кăларакан сорчĕсене закуп йĕркипе илнĕ чухне хушса тўлеме ирĕк панă.

Маргарин туса кăларассине те тĕпренех ўстерме палăртнă. 1956 çулта ăна туса кăларасси, 1950 çулхипе танлаштарсан, 2,7 хут ўсмелле. Çавăнпа пĕрлех чи лайăх сортлă тата пĕчĕк висене чĕркенĕ маргарин туса кăларасси те чылай ўсет.

Кондитер, çăкăр пĕçерекен тата консерв промышленноçне—çĕнĕ задачăсен çўлĕшне

Ĕççыннисем кондитер изделийĕсем — конфетсем, шоколадсем, пирожнăйсем, тортсем тата ыттисене те ытларах ыйтма пуçлани совет халăхĕн материальнăй пурнăçĕпе культурăллă шайĕ тăтăшах ўссе пынине уççăн кăтартса паракан тĕслĕх пулса тăрать. Халăх ыйтнине тивĕçтерес тĕлĕшпе кондитер изделийĕсем туса кăларассине çакăн чухлĕ ўстермелле: 1950 çулта 994 пин тонна тата 1953 çулта 1.387 пин тонна туса кăларнă пулсан, 1954 çулта—1.579 пин тонна тата 1955 çулта 1.825 пин тонна туса кăлармалла.

Çапла вара кондитер изделийĕсем туса кăларасси 1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 86 процент ўсет. Çавăн пек çимĕçсем тăвассине ытларах ўстерме палăртнă: çемçе конфетсем туса кăларасси икĕ хут, шоколадпа витнĕ конфетсем туса кăларасси 4,8 хут ўсмелле. Шоколад тата шоколад изделийĕсем туса кăларасси 1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 3,8 хут ўсмелле. Печени, премĕксем, тортсем, пирожнăйсем, кекссем чылай нумайрах туса кăлараççĕ. Пирĕн халăх ытларах ыйтакан çимĕçсем, çав шутра «Золотой ключик» ирис, «Театральная» леденецла карамель, «Раковая шейка», «Гусиные лапки» карамельсем, варрине мăйăр тĕшши хунă ытти йышши карамельсем, çавăн пекех тата, «Мишка косолапый» конфетсем туса кăларассине анлă сармалла.

Продукцин ассортиментне нумайлатас тата пахалăхне лайăхлатас задачăсем кондитер промышленноçĕн производствине автоматизацилессипе механизацилессине вăйлатас, производствăри культурăна ўстерес тĕлĕшпе чылай ĕçсем тума хушать.

Юлашки çулсенче халăх паха йышши çăкăрпа булкăсем, уйрăмах сортлă тулă çăнăхĕнчен пĕçернисене. нумайрах ыйтнă май, çăкăрпа булкăсен ассортиментне малалла нумайлатса пымалла. Ыраша тата тулла сăсăлран уйăрса вĕтĕ авăртнă çăнăхран штукăн сутмалли çăкăрсемпе булкăсем пĕçерсе кăларассине 1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, 5,9 хут, вĕсене сортлă тулă çăнăхĕнчен пĕçерсе кăларассине 2,9 хут ўстермелле.

Макаронсем туса кăларасси чылай ўсет, вĕсене туса кăларасси 1954 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, икĕ хут, 1955 çулта—2,3 хут ўсмелле. Трубчатăй, çинçе тата ытти йышши лайăх макарон çимĕçĕсем туса кăларасси уйрăмах нумай ўсет.

Рынок ыйтнине тивĕçтермелле тăвас шутпа çĕпре нумай туса кăларма пуçланă. Пирĕн умра хальхи вăхăтра тăракан чи пысăк задачăсенчен пĕри çăнăхăн пахалăхне лайăхлатасси тата сортлă çăнăхпа кĕрпене малтанах висçе чĕркесе хатĕрлес ĕçе организацилесси пулать.

Пирĕн çĕршыври халăх пахча çимĕç консервĕсем, апат-çимĕç концентрачĕсем ытларах та ытларах ыйтать. Пахча çимĕç, томат, улма-çырла консервĕсем тата аш-какайпа пахча çимĕçе хутăштарса тунă консервсем туса кăларасси чылай ўсет. Тĕрлĕ йышши консервсем 1956 çулта 4.150 миллион банка, урăхла каласан. вĕсене 1950 çулхинчен 2,9 хут нумайрах туса кăлармалла Апат-çимĕç концентрачĕсем, çав шутра типĕ кĕселсем, çавăн пекех типĕ апатсем, тинкĕле ача валли çăнăх туса кăларасси чылай ўсет.

Пĕтĕм продукцин пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешесси—апат-çимĕç промышленноçĕнчи работниксен хисеплĕ ĕçĕ

Пирĕн промышленность хăйĕн пĕтĕм продукцине сынсем валли туса кăларать. Çавăнпа та çак промышленность умне уйрăмах пысăк требовани кăларса тăратаççĕ, унăн продукцийĕ пахалăх тĕлĕшĕнчен лайăх пулмалла. Пирĕн çĕршывра пур йышши апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине те чылай ўстерме палăртнине пурте пĕлеççĕ ĕнтĕ. Сăмахран, чĕй, сăра, улма-çырла шывĕсем, минераллă шывсем, шампански эрех, коньяксем, тĕрлĕ йышши ликерсемпе эрехсем, пируссемпе сигаретсем, супăнь, парфюмерипе косметика япалисем нумайрах та нумайрах туса кăлармалла. Анчах çав таварсене тата ытти йышши таварсене туса кăларассине анлă сарнипех çитмест-ха. Кашни япалана пахалăх тĕлĕшĕнчен лайăх туса кăларма уйрăмах хытă тăрăшас пулать.

Апат-çимĕç продукчĕсем тĕрлĕ сортлă пулма пултараççĕ тата пулмалла та, анчах вĕсене пурне те пахалăх тĕлĕшĕнчен лайăх туса кăларас пулать. Çавăн чухне кăна эпир таварсене пĕр именмесĕр сĕнме пултаратпăр. Ĕçе çапла йĕркелемелле: пирĕн фабрикăсемпе заводсем туса кăларакан япаласем пĕтĕмпех питĕ паха пулмалла.

Вăрçă хыççăнхи тапхăрта апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕ апат-çимĕçсен ассортиментне нумайлатас тата пахалăхне лайăхлатас тĕлĕшпе чылай ĕçсене пурнăçларĕ. Çапах та ку енĕпе пысăк çитменлĕхсем пур-ха, çавăнпа та продукци пахалăхĕшĕн кĕрешес ĕçе вăйлатас пулать.

Кăçалхи июнь уйăхĕнче, правительство решенийĕ тăрăх, продукцие курттăмăн сутас ĕçе промышленноçран илсе СССР Суту-илў министерствин системине панă, кунпа пĕрлех апат-çимĕç таварĕсен пахалăхне тĕрĕслекен Инспекцисене те çав системăна панă. Çакна продукцин ассортиментне тата пахалăхне тĕлĕшĕнчен промышленноçран хытăрах ыйтас, ăна совет çыннине кирлĕ тата вăл ыйтнă пек паха таварсем туса кăларма хистес шутпа тунă.

Промышленность работникĕсен çакна ăнланса илес пулать: стандартсене тата рецептсене пăсса тунă, стандартлă мар ешĕксене тата савăт-сапана тултарнă, кирлĕ пек чĕркемен апат-çимĕçсене суту-илў организацийĕсем малашне йышăнмаççĕ. Çавăн пек таварсем складсенчех юлаççĕ. çакă вара, паллах ĕнтĕ, укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен йывăрлăхсем тухса тăрасси патне çеç мар, производство процесĕсене пăсасси патне те илсе пыма пултарать.

Государство инспекцийĕн работникĕсем виççĕмĕш кварталта апат-çимĕç туса кăларакан тăватă пин ытла предприятин ĕçĕсене тĕрĕсленĕ. Çакна калама тивет: тĕрĕсленĕ чухне стандартлă мар тата начар продукци туса кăларнă фактсем пурри палăрнă.

Продукци пахалăхĕпе предприятири санитари тĕлĕшĕнчен йĕркелĕх пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса тăраççĕ Пирĕн фабрикăсемпе заводсенче нумайăшĕнче санитари режимне çирĕп тытса пыраççĕ Анчах предприятисенче санитари тĕлĕшĕнчен чи çирĕп йĕрке тумасăр паха продукци туса кăларма май килменнине ăнланса илмен директорсем халĕ те тĕл пулаççĕ-ха.

Туса кăларакан продукцин ассортиментне лайăхлатас, унăн пахалăхне ўстерес, продукцин сыншăн усăллă енĕсене сыхласа хăварас ĕçре холодильниксемпе усă курмалла туни питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çĕнĕ холодильниксем туса, халĕ усă куракан холодильниксене урăхлатса çĕнетсе тата техникăпа пуянлатса, 1954—1956 çулсенче холодильниксен продукци усрамалли калăпăшне чылай пысăклатмалла.

Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине ўстермелли тата вĕсен пахалăхне лайăхлатмалли чи кирлĕ те пысăк условисенчен пĕри вăл техникăна тăтăшах аталантарса пыни тата унпа ытларах усă курни пулать. Ку енĕпе наука хисеплĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Юлашки вăхăтра пирĕн наукăпа тĕпчев институчĕсем промышленноçăн уйрăм отраслĕсене аталантарас тĕлĕшпе сахал мар ĕçлерĕç. Çавăнпа пĕрлех наукăпа тĕпчев институчĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пуррине палăртас пулать. Наукăпа тĕпчев ĕçĕсен темисем ытла та нумай, çакă вара научнăй вăйсем сапаланса ĕçлесси, институтсен ĕçĕн усси чакасси патне илсе пырать, наука енĕпе тунă ĕçсенчен нумайăшĕ промышленноçра вăраххăн ĕçе кĕрсе пырать.

Партипе правительство пирĕн промышленноçа пур йышши тара та парса тăрассине хăвăрт лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тума палăртрĕç. Апат-çимĕç таварĕсене малтанах висçе чĕркесе хума ятарласа тунă сортлă хут, пергамент, картон, фольга тата целлофон парса тăрассине ўстерме палăртнă.

Апат-çимĕç туса хатĕрлес ĕçĕн культурине тата çўлерех пусăма çĕклесси, продуктсен пахалăхĕ, тути тата тутлăхĕ тĕлĕшпе требованисене ўстересси. вĕсене лайăх чĕркемелле тăвасси апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕн мĕнпур работникĕсен тивĕçĕ. çак ĕçсене пурнăçлассишĕн рабочирен пуçласа инженерпа директор таранах тăрăшмалла. Апат-çимĕç хатĕрленĕ чухне пур çĕрте те санитари условийĕсем питĕ лайăх пулмалла тăвас пулать, производствăн технологи схемине çирĕппĕн пăхăнса ĕçлемелле, çирĕплетнĕ рецептсене тата режима яланах наука хушнă пек пурнăçласа пымалла.

Промышленность строительствинчи çитменлĕхсене пĕтермелле

Апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕ, халăх хуçалăхĕн ытти отраслĕсем пекех, çĕнĕ предприятисем туса лартас, киввисене пысăклатас, çавăн пекех малта пыракан техникăпа тата механизаци хатĕрĕсемпе усă курас тĕлĕшпе чылай пысăк çитĕнўсем тунă. Анчах кучухнехи оборудованипе пуринчен ытларах союзла министерствăна пăхăнса тăракан пысăк предприятисем хĕçпăшалланнă. Пĕчĕкрех предприятисенче кивелнĕ оборудовани нумай-ха автоматизаци шайĕ çўлте тăмасть, алăпа тăвакан операцисен проценчĕ пысăк.

Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕпе СССР Министрĕсен Совечĕ 1953 çулхи октябрĕн 12-мĕшĕнче йышăннă постановленире апат-çимĕç таварĕсен производство процесĕсене хăвăртрах механизацилеме тата автоматизацилеме пысăк тухăçлă машинăсемпе автоматсем туса кăларассине чылай ўстерме палăртнă. Çав тĕлĕшрен Машиностроени министерстви умне пысăк та ответлă задачăсем лартнă.

Малта тăракан техникăпа тата анлăрах усă курас тесен. пирĕн çĕнĕ предприятисем туса лартмалла, ĕçлекен предприятисене пысăклатмалла, промышленность строительствине анлă сармалла. Çапла вара, апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕ умне лартнă мĕнпур пысăк задачăсене пурнăçласси капитальнăй строительствăна анлă сарассипе тачăн çыхăнса тăрать. Çапла туни производство хăвачĕсене продукци туса кăларма палăртнă шая çитерме май парĕ.

1954—1956 çулсенче çакăн пек ĕçсем туса ирттермелле: аш-какайран тĕрлĕ апат-çимĕç туса кăларакан предприятисем—144, сахăрпа песок завочĕсем—25, çăкăр завочĕсемпе механизациленĕ пекарньăсем—372, çу тата сыр завочĕсем—720, ўсентăран çу комбиначĕсемпе заводсем—24, консерв тата улма-çырла, пахча çимĕç продукчĕсем тăвакан заводсем —50, хуласенчи сĕт завочĕсем—100, çăра

(Юлашки 3-мĕш страницăра).

*) Кĕскетнĕ стенограмма тăрăх пичетленĕ.

В. П. ЗОТОВ юлташăн доклачĕ

(Юлашки).

заводчĕсемпе тутлă шывсем тăвакан заводсем—136, хĕрлĕ эрех тăвакан заводсем—34, маргарин тăвакан заводсем—12, чăхчăп фабрикисем—20 тата ытти предприятисем туса лартса ĕçе ямалла. Апат-çимĕç промышленноçĕ хăй аталанма тытăннăранпа та производстве никĕçĕ çавăн пек пысăк хăвăртлăхсемпе ÿснине нихçан та пĕлмен.

Пирĕн задача вăл уйăрса панă укçа-тенкĕпе усăллă, тĕрĕс усă курас тата çĕнĕ предприятисене вăхăтра ĕçе ярас тесе строительство ĕçĕсене лайăх организацилесси пулать. Анчах кăçалхи капитальнăй строительство ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Тăхăр уйăх хушшинче çулталăкри капитальнăй строительство планне 56 процент çеç тултарнă. Производство хăвачĕсене ĕçе ярасси хытă юлса пырать. Уйрăмах холодильниксене ĕçе ярасси юлса пырать. Строительствăна организацилес ĕçре пысăк çитменлĕхсем пур.

Министерствăна пăхăнса тăракан строительство организацийĕсем механизмсемпе оборудовани нумай туянчĕç. Анчах строительство ĕçĕсене комплексла механизацилемелли тата çĕнĕ техникăна ĕçе кĕртмелли государство планĕ çителĕксĕр пурнăçланса пырать. Механизацилессине кирлĕ пек хакламанни, çавăн пекех тата ытти çитменлĕхсем строительство ĕçĕсене хаклатаççĕ.

Строительсем кая юлнине пĕтерме тивĕçлĕ. Строительствăна мĕн май килнĕ таран йÿнетмелле, проектсем тунă чухне тăкаксене пĕтермелле, ĕç срокĕсене чакармалла, механизмсемпе хăюллăнрах усă курмалла тата вĕсене лайăхрах ĕçлеттермелле.

Апат-çимĕç промышленноçĕнчи работниксен пурнăç условийĕсене лайăхлатассишĕн куллен тăрăшмалла

Апат-çимĕç таварĕсем туса кăларас тĕлĕшпе татăклă çĕклену тăвассишĕн кĕрешес ĕç ăнăçлă пуласси кадрсем хатĕрленинчен, вĕсене тĕрĕс суйласа илнинчен тата вырнаçтарса лартнинчен нумай килет. Çитес икĕ-виçĕ çул хушшинче пире аслă шкулсенчен вĕренсе тухнă специалистсем 18 пин, вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă специалистсем—30 пин кирлĕ пулать. Министерство апат-çимĕç промышленноçĕнчи аслă шкулсенче, техникумсенче, ФЗО шкулĕсенче тата техникăлла курссенче кадрсем вĕрентсе хатĕрлессине лайăхлатма мерăсем йышăнма тивĕçлĕ. Кăçал çеç массăлла профессиллĕ работниксем 330 пин çынна яхăн хатĕрлемелле.

Хамăр работниксем умне пысăк требованисем кăларса тăратнă вăхăтрах пирĕн вĕсен материальнăй тата йăла условийĕсене лайăхлатассишĕн, культура шайне ÿстерессишĕн пĕрмаях тăрăшмалла. Партипе правительство Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине пурăнмалли çуртсем, ача сачĕсем, ача яслисем, больницăсем, шкулсем туса лартма, ĕç условийĕсене лайăхлатма тата хăрушсăрлăх техникине вăйлатма çулсеренех укçа-тенкĕ нумай уйăрса параççĕ.

1954—1956 çулсенче пурăнмалли çуртсемпе йăла учрежденийĕсем лартма укçа-тенкĕ уйăрса парассине нумай ÿстерме палăртнă. 1953 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн промышленноçри предприятисенче пурăнмалли çуртсем 7 миллион тăваткал метр пулнă пулсан, 1953 çулта çеç пурăнмалли çуртсем çĕнĕрен 500 пин тăваткал метр туса лартатпăр. 1954 çулхи план тăрăх, пурăнмалли çуртсем, культурăпа йăла учрежденийĕсем туса лартма 1,5 миллиард тенкĕ ытла хывмалла. Çавна пурнăçлани тата 900 пин тăваткал метр пурăнмалли çуртсем туса пĕтерме май парать.

Министерствăна пăхăнса тăракан предприятисемпе организацисенче ача сачĕсем 1.398 пур. 1954 çулта ача сачĕсем çĕнĕрен 130 туса лартатпăр. 1953 çулта ача сачĕсене пирĕн предприятисенчи рабочисемпе служащисен 51 пин ачи çÿрет пулсан, 1954 çулта 60 пин ытла ача çÿремелле. Ку хисепе çуллахи вăхăтра лагерьсенче канакан ачасем кĕмеççĕ. Кунсăр пуçне пирĕн системăра 754 клуб, культура çурчĕсем, хĕрлĕ кĕтессем—çичĕ пин ытла, библиотекăсем—1.200 ытла пур. Çавăн пекех санаторисемпе канмалли çуртсем те пур.

Пурăнмалли çуртсем тата йăла учрежденийĕсем туса лартма укçа-тенкĕ уйăрса парасси çултан-çул ÿссе пырать пулин те, апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕн хăшпĕр предприятийĕсенче, уйрăмах инçетри хăшпĕр районсенче, пурăнмалли çуртсем чылай çитмеççĕ. Пурăнмалли çуртсем тата йăла учрежденийĕсем туса лартмалли плансем нумай чухне пурнăçланманни çак йывăрлăха тата ытларах ÿстерет.

Министерствăн, главнăй управленисен начальникĕсен, трестсен управляющийĕсен тата предприятисен директорĕсен пурăнмалли çуртсем, коммунальнăй предприятисем тата йăла учрежденийĕсем туса лартмалли плансене тултарас тĕлĕшпе тимлĕрех ĕçлемелле, çав ĕçсене пурнăçлама уйăрса паракан укçа-тенкĕпе туллин усă курмалла.

Промышленноçа техникăпа хĕçпăшаллантарса пынă, пысăк тухăçлă оборудованипе усă курнă вăхăтрах ĕç условийĕсене тата хăрушсăрлăх техникине лайăхлатасси çине уйрăмах тимлĕ пăхнă тата пăхаççĕ те. Ĕç условийĕсене лайăхлатмалли мерăсене пурнăçлама правительство çулсеренех укçа-тенкĕ нумай уйăрса парать. Çав ĕçсене тума 1954 çулта çеç пирĕн предприятисене 150 миллион тенкĕ уйăрса параççĕ.

Ĕçре пысăк çитĕнÿсем тунăшăн правительство апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕн чылай отраслĕсем тăрăх ятарласа льготăсемпе хавхалантаракан майсем çирĕплетнĕ. Ялхуçалăх культурисен тата выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ÿстерес тĕлĕшпе çитĕнÿсем тунăшăн министерствăна пăхăнса тăракан совхозсенчи работниксене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлаççĕ, ĕçре уйрăмах палăрнисене вара Социализмла Ĕç Геройĕ ятне параççĕ.

Пулă промышленноçĕнче пулă нумай тытакан пулăçă-колхозниксене нумай пулă тытакан мастер ятне тата преми параççĕ. Флотра, портсенче, суднăсем тăвакан, суднăсем юсакан предприятисенче ĕçлекенсене нумай çул ĕçленĕшĕн ĕç укçи хушса тÿлеççĕ. Камчаткăри, Мурманск облаçĕнчи инçетри районсенчи, Якут АССР-ĕн поляр унки леш енчи районĕнчи пулă промышленноçĕнче ĕçлекенсене пысăк пенси параççĕ. Пулă промышленноçĕнче, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес тата вĕсенчен тĕрлĕ продуктсем туса кăларас тĕлĕшпе ĕçлекенсене нумай çул ĕçленĕшĕн Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăлаççĕ; аш-какайпа сĕт промышленноçĕнчи работниксене нумай çул ĕçленĕшĕн ĕç укçи хушса тÿлеççĕ.

Тăвар промышленноçĕнчи уйрăхларах условисене шута илсе, правительство кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа çак промышленноçри рабочисене, ертсе пыракан инженерла-техникăлла работниксене нумай çул ĕçленĕшĕн ĕç укçи хушса тÿлемелле турĕ.

Пирĕн промышленноçри мĕнпур предприятисенче производство мастерĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Вĕсене хисеплеççĕ тата вĕсемшĕн тăрăшаççĕ. Лайăххисене пĕрремĕш тата иккĕмĕш категориллĕ мастер ятне параççĕ, мĕнле категори панине кура вĕсене ĕç укçи 15 процентран пуçласа 40 процент таран хушса тÿлеççĕ.

Партипе правительство тăрăшнипе хавхаланса, апат-çимĕç предприятийĕсенче ĕçлекенсем производствăра çĕнĕ çитĕнÿсем тăваççĕ, пысăк пахалăхлă продукци туса кăлараççĕ. Пирĕн малашне те рабочисемпе служащисен пурнăçпа йăла тата ĕç условийĕсене лайăхлатассишĕн çине тăрса кĕрешмелле, кадрсен квалификацине ÿстермелле, вĕсен материальнăй пурнăçне малалла лайăхлатмалла.

* * *

Партипе правительство Апат-çимĕç таварĕсен промышленность министерствине продукцин хăйне ларакан хакне малалла йÿнетмелли, чĕртавăр тата хатĕр продукци тăкакĕсене чакармалли, накладнăй расходсене пĕчĕклетмелли ĕçсене палăртса, вĕсене пурнăçа кĕртме хушрĕç. Промышленноçра продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетни, суту-илÿре тавар çаврăнăшĕнчи расходсене чакарни пирĕн çĕршывра таварсен хакĕсене тăтăшах йÿнетсе пырассине пурнăçламалли питĕ кирлĕ услови пулса тăрать.

Çакна палăртас пулать: пирĕн япăх ĕçлекен предприятисем нумай-ха. Çавăн пирки апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕ пĕтĕмĕшпе илсен продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли заданисене пурнăçламасть. Çакă вăл производствăра тата усранă чухне чĕртавăр тăкакĕсем ытлашши нумай пулнинчен, оборудованипе тата ĕç вăйĕпе çителĕксĕр усă курнинчен, чĕртавăр хатĕрленĕ тата продуктсене ăсатнă чухне ытлашши нумай расходсем тунинчен килет.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерни—продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетмелли чи кирлĕ факторсенчен пĕри. Юлашки виçĕ çул хушшинче апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕнче ĕç тухăçлăхĕ 25 процент ÿснĕ. Анчах унăн хăшпĕр отраслĕсенче ĕç нормисене тултарман рабочисем чылай-ха. Министерствăн уйрăм главнăй управленийĕсем, сăмахран, Главсахар, Главмолоко, Главмаслосырпром, Главпарфюмер, пулă промышленноçĕнчи пур главксем те тенĕ пекех ĕç тухăçлăхне ÿстермелли заданисене пурнăçламаççĕ. Предприятисенче ĕçе организацилессине татăклăн лайăхлатмалла, çĕнĕ техникăпа тата механизаци хатĕрĕсемпе туллин усă курмалла.

Апат-çимĕç таварĕсен промышленноçĕнче ĕçлекенсем СССР Верховнăй Совечĕн V-мĕш сессийĕ тата КПСС Центральнăй Комитечĕн сентябрьти Пленумĕ йышăннă решенисене пысăк хавхаланупа кĕтсе илчĕç. Пирĕн задача çакă пулать: партипе правительство апат-çимĕç таварĕсем туса кăларассине чылай ÿстерме, вĕсен пахалăхне лайăхлатма, производство культурине ÿстерме, çапла вара çитес çулсенче пысăк пахалăхлă апат-çимĕç таварĕсем туса кăларас тĕлĕшпе татăклă çĕклену тума çирĕплетсе панă заданисене пурнăçлассишĕн тата ирттерсе пурнăçлассишĕн социализмла ăмăртăва анлăрах сармалла.

Совет строительстви

Решенисене пурнăçлас ĕçе организацилесси çинчен

Партипе правительство йышăннă постановленисене вăхăтра тата ăнăçлă пурнăçласси райисполкомсемпе ял Совечĕсем организациллĕ-массăлла ĕçе куллен туса пынинчен нумай килет. Вырăнти Советсемпе вĕсен исполкомĕсен умра тăракан задачăсем çинчен актива тата мĕнпур ĕçсыннисене тĕплĕн ăнлантарса памалла, плансемпе заданисене пурнăçлас ĕçе мĕнпур ĕçсыннисене хутшăнтармалла.

Çав шутпа предприятисемпе учрежденисен руководителĕсен, специалистсен тата ытти работниксен канашлăвĕсене, ĕçсыннисен пĕрлехи пухăвĕсене ирттерни усăллă.

Вырăнти Советсемпе вĕсен исполкомĕсен йышăннă решенисенче палăртнă ĕçе хăçан туса пĕтермеллине тата кам тумаллине кăтартса памалла, решенисем çинчен вĕсене пурнăçлама тивĕçлĕ работниксене çийĕнчех пĕлтермелле. Решенисем мĕнле пурнăçланса пынине исполкомсен тата яланхи комиссисен тăтăшах тĕрĕслесе тăмалла. Çапла майпа пирĕн мĕнпур работниксен партипе государство умĕнче хушнă ĕçшĕн ответлă пулас туйăмне пĕрмаях ÿстерсе пымалла. Хамăр Тăван çĕршывăн интересĕсене çирĕп тытса пырасси, партипе государство решенийĕсене пурнăçлассишĕн активлă кĕрешесси кашни работникăн чи пирвайхи тивĕçĕ пулса тăрать.

Вырăнти Советсем хăйсен сессийĕсенче решенисем нумай йышăнаççĕ. Çав решенисене практикăра пурнăçа кĕртес ĕçе райисполкомсемпе ял Совечĕсем мĕнле организацилеççĕ-ха?

Район тата хула Совечĕсен исполкомĕсем решенисене пурнăçлас тĕлĕшпе нумай ĕçлеççĕ, хуçалăхла-политикăлла задачăсене пурнăçлама депутатсене, активистсене, специалистсене тата ытти ĕçсыннисене хутшăнтараççĕ. Ку енĕпе Улатăр хула Совечĕн исполкомĕ лайăх ĕçлет. Исполком мĕнле ĕçленипе паллаштарма пĕр тĕслĕх илсе кăтартар.

Хула Совечĕн сессийĕнче пĕррехинче «Промышленность предприятийĕсемпе промысла артелĕсенче ĕçлекенсене медицина енĕпе пулăшу парас ĕçе лайăхлатасси çинчен» сÿтсе явса решени йышăннă. Пăртак вăхăт иртсен, решенире палăртнă ĕçсем мĕнле пулса пынине хула Совечĕн сывлăха сыхлас енĕпе ĕçлекен комиссийĕ тĕрĕсленĕ. Комисси материалĕсене исполкомра пăхса тухса конкретлă решени йышăннă. Умра мĕнле ĕçсем тăни çинчен ăнлантарса пама хулари медицина работникĕсен канашлăвне ирттернĕ. Кун хыççăн сывлăх учрежденийĕсемпе ача яслисенче ĕçсем чылай лайăхланнă. Поликлиникăра чирлĕ рабочисемпе служащисене каçхине йышăнмалли йĕрке тунă. Врачсене чирлĕ çынсем патне чĕнсен, вĕсем чирлисем патне вăхăтра çÿреме пуçланă.

Ытти решенисене пурнăçлас ĕçе те исполком çавăн пек организацилет. Çавна май вăл кăçал хулана лайăхлатса илемлетмелли, укçа-тенкĕ пухмалли тата ытти ĕçсен планĕсене вăхăтра тата ăнăçлă пурнăçласа пыма пултарчĕ.

Анчах чылай районсенче решенисене пурнăçлас ĕçе кирлĕ пек организацилемеççĕ. Ку енĕпе уйрăмах Вăрнар райисполкомĕ çителĕксĕр ĕçлет. Сăмахран, колхозсенче обществăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçе вăйлатасси çинчен район Совечĕн тата ял Совечĕсен сессийĕсенче темиçе хутчен те сÿтсе явнă, лайăх решенисем йышăннă. Анчах выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç лайăхланман. Сăлтавĕ акă мĕнре: Советсен решенийĕсем çинчен выльăх ĕрчетекен работниксем хушшинче ăнлантарса парас ĕçе йĕркелеме райисполком та, ял Советсен исполкомĕсем те сахал тăрăшнă, хăшпĕр решенисем çинчен фермăсен заведующийĕсем çеç мар, колхоз председателĕсем те пĕлмеççĕ. Сессисенче район бюджечĕ мĕнле пурнăçланса пыни çинчен те пĕр хут кăна мар сÿтсе явнă, çапах та укçа-тенкĕ пухас ĕç япăх пырать. Çакă та решенисене пурнăçлас ĕçе организацилеменнинчен, решенисене ĕçе тăвакансем патне çитерменнинчен килет. Çапла вара решенисенчен нумайăшĕ хут çинче çеç тăрса юлаççĕ.

Район Совечĕн пĕр сессийĕнче йышăннă решенире çапла çырса хунă: «Район тата ял Совечĕсен сессийĕсене ирттерме хатĕрленес ĕçе лайăхлатмалла, сессисен ĕçне пур депутатсем те активлă хутшăнмалла тăвас пулать, йышăннă решенисене мĕнле ĕçе кĕртни çинчен тата депутатсен критикăлла асăрхаттарăвĕсемпе сĕнĕвĕсене пурнăçлас тĕлĕшпе мĕн туни çинчен депутатсене тăтăшах пĕлтерсе тăмалла». Çак решени те ĕçе кĕрсе пымасть. Сессисене ирттерме халĕ те япăх хатĕрленеççĕ, сессисенче депутатсем панă сĕнÿсене исполком ларăвĕнче сÿтсе явмаççĕ. Исполком руководителĕсен çакăн пек юрăхсăр практики депутатсен активлăхне чакарать. Каланă сăмахсем хут çинче кăна юлассине пĕлсе, чылай депутатсем сессисенче тухса каламаççĕ. Хăшпĕр чухне сессисенче критикăпа самокритика пачах пулмасть. Уйрăм депутатсем сессисенче пулмаççĕ. Ултă депутат суйлав иртнĕренпе те пĕр е икĕ сессире кăна пулнă. Район Совечĕн пĕр сессийĕнче депутатсем хăйсен суйлавçисем умĕнче тăтăшах отчет туса памалли çинчен решени йышăннă. Анчах исполком депутатсем хăйсен ĕçĕсем çинчен суйлавçăсен пухăвĕсенче отчетсем туса парас ĕçе халиччен те йĕркелемен.

Решенисене пурнăçлас ĕçе организацилесси Муркаш районĕнче те кирлĕ пек пулса пымасть. Район Совечĕн пĕр сессийĕнче çĕнĕ вĕренÿ çулне хатĕрленесси çинчен сÿтсе явнă. Унта депутатсем шкулсенчи çитменлĕхсене хытă критикленĕ. Сесси паха решени йышăннă. Анчах çав решение шкулсен директорĕсем патне çитермен, ун çинчен вĕсене калаçса паман. Çавăн пирки решени пурнăçа кĕмен. Вĕренме тивĕçлĕ ачасем хушшинче шкула çÿременнисем халĕ те пур. Вĕренÿре ăлкĕрсе пырайманнисем чылай.

Шупашкар хула Совечĕн пилĕкмĕш сессийĕ 1953 çулта хулана лайăхлатса илемлетес ĕç мĕнле пыни çинчен сÿтсе явнă. Унта депутатсем хулана лайăхлатса илемлетес ĕçри чылай çитменлĕхсене палăртнă. Çак ĕçе кирлĕ пек ертсе пыманшăн хула Совечĕн исполкомне хаюллăн критикленĕ, çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе лайăх сĕнÿсем панă.

— Хула Совет исполкомĕн коммунальнăй хуçалăх пайĕ хулана лайăхлатса илемлетес пирки пуçарулла ĕçлемест,— тенĕ С. Дмитриев депутат.—Кунта бюджетран уйăрса панă укçа-тенкĕпе çеç усă курни çителĕксĕр, ку ĕçе общественноçа ытларах явăçтармалла, çапла майпа чылай ĕçсем тума май килет, йывăçсем лартма, картасем тытма тата ытти ĕçсене тума пулать.

Решенисене пурнăçлассишĕн исполком сахал тăрăшнине Г. Шапошников депутат та палăртнă. Хулари хăшпĕр предприятисемпе учрежденисене пымалли çулсем япăх, вĕсене юсамалли çинчен пĕрре кăна мар решени йышăннă, анчах вĕсем пурнăçа кĕмен.

Депутатсен сĕнĕвĕсене шута илсе, сесси сÿтсе явнă ыйту тăрăх тивĕçлĕ решени йышăннă. Унта хула Совет исполкомне кăçал çĕнĕ çуртсем лартас, хулана лайăхлатса илемлетес енĕпе тума палăртнă ĕçсене пĕтĕмпех пурнăçлама хушнă. Çакăн хыççăн депутатсем хăйсен сĕнĕвĕсем пурнăçа кĕрессе шаннă. Анчах шанни ахалех пулнă. Исполком сесси йышăннă решение пурнăçлассишĕн начар кĕрешнĕ. Кăçалхи тăхăр уйăхра коммунальнăй предприятисене тĕпрен юсамалли плана 69.3 процент, чул сарса çулсем тумалли тата юсамалли плана 62.1 процент кăна пурнăçланă.

Депутатсем сессисенче исполкома хытă критиклеççĕ. Вĕсен сăмахĕсене исполком работникĕсем тимлĕ итлеççĕ, çакăнпа вара ĕç вĕçленет. Сессире исполком отчетне итленĕренпе исполком хăйĕн пайĕсен ĕçĕсене пĕрре те тĕрĕслемен. Вĕсем мĕнле ĕçлени çинчен исполком ларăвĕнче пачах сÿтсе явман. Кăçал пĕр депутат та хăйĕн ĕçĕсем çинчен суйлавçăсем умĕнче отчет туса паман.

Кун пек тĕслĕхсем татах та илсе кăтартма пулать. Вĕсенчен хăшпĕр район тата хула Совечĕсен исполкомĕсемпе ял Совечĕсен руководителĕсем организацилле ĕçе хакламанни курăнать. Ку пысăк çитменлĕхе пĕтерме вăхăт ĕнтĕ. Решенисене пурнăçа кĕртес ĕçре вырăнти Советсен исполкомĕсен йышлă актив, ĕçсыннисен анлă массисем, обществăлла организацисем çине таянмалла, кирек мĕнле ĕçе те оперативлă тата конкретлă ертсе пымалла. Çапла ĕçлесен, вĕсем партипе правительство халăхăн пурнăçне лайăхлатасси, ялхуçалăхне малалла аталантарса пырасси çинчен йышăннă постановленисене ăнăçлă пурнăçласа пыма пултарĕç.

М. РОДИОНОВ,
Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн информаци группин заведующийĕ.

ТИМĔР-ТĂМĂР ПУХАÇÇĔ

ШĂХАСАН. Атнашри çичĕ çул вĕренмелли шкулта кашни вĕренекен государствăна вуншар килограмм тимĕр-тăмăр пухса пама сăмах пачĕ. Халĕ вĕренекенсем пурĕ 4.200 килограмм тимĕр-тăмăр пухнă. Хăшпĕр вĕренекенсем 100—113 килограмм таран пухса пачĕç. Улттăмĕш класра вĕренекен Н. Иванов пĕччен 172 килограмм пухса пачĕ.

В. ТЕРЕНТЬЕВ.

„Коммунизм ялавĕ" хаçатра çырнă хыççăн

«УДОБРЕНИСЕНЕ УСĂСĂР ВЫРТТАРМАЛЛА МАР»

«Коммунизм ялавĕ» хаçатра сентябрĕн 4-мĕшĕнче пичетленсе тухнă «Удобренисене усăсăр вырттармалла мар» ятлă çырура ялхуçалăх снабженин Йĕпреçри склачĕнче хума вырăн çитмен пирки темиçе çĕр тонна удобрени чугун çул линийĕ патĕнче юхăнса выртни çинчен çырнăччĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен Йĕпреç район Совечĕн исполкомĕ «Удобренисене усăсăр вырттармалла мар» ятлă çырăва ялхуçалăх специалисчĕсемпе колхоз председателĕсен канашлăвĕнче сÿтсе явни, çитменлĕхсене пĕтерме мерăсем йышăнни çинчен пĕлтерчĕ.

Социализм çĕршывĕн хăватлă артиллерийĕ

Совет артиллерийĕ хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн пынă кĕрешÿре пысăк тава тивĕçлĕ ĕçсем тунă. Артиллери Аслă Отечественнăй вăрçăра паха ĕçсем тунине палăртса, СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ 1944 çулта кăларнă Указ тăрăх, кашни çулах Артиллери кунне уявламалла тунă.

Кăçал пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем, Çарпа Флот воинĕсем Совет артиллерийĕн кунне халăх хуçалăхĕ пур енĕпе те малалла вăйланса пынă лару-тăрура ирттереççĕ. Пирĕн экономика, пуринчен ытларах унăн тĕп никĕсĕ—йывăр индустри—хăвăрт аталанса пыни Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине халăх пурнăçне лайăхлатас тĕлĕшпе пысăк решенисем йышăнма май пачĕç. Пĕтĕм халăх умне халех татса памалли задача—çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçне тата ялхуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене хăвăрт вăйлатнипе çитес икĕ-виçĕ çул хушшинчех халăха куллен кирлĕ япаласем питĕ нумай туса хатĕрлес задача лартнă. Çак задачăна пурнăçлани малалла, коммунизм патне каймалли çул çинче питех те пысăк утăм туни пулать.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительствин аслă политикин тĕллевĕ ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн, социализмла государствăна тата Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне малалла тĕреклетсе пырассишĕн, халăхсем хушшинчи мире сыхласа хăварассишĕн тата тĕреклетессишĕн яланах тимлĕ тăрăшасси пулать. Çавăнпа парти политикине совет халăхĕ тата демократиллĕ лагерьти çĕршывсенчи халăхсем пĕр шухăшлă пулса ырлаççĕ, ăна малта пыракан пĕтĕм этемлĕх кăмăлласа ырлать.

Совет Союзĕн Хĕçпăшаллă Вăйĕсем совет çыннисен мирлĕ ĕçне çивĕччĕн сыхласа тăрассине хăйсен чи хисеплĕ те чыслă ĕçĕ тесе шутлаççĕ. Ытти йышши çарсен воинĕсемпе пĕрле, Тăван çĕршывăн интересĕсене совет артиллерисчĕсем те сыхă хураллаççĕ.

А. МЕТКАЛЕВ,
Артиллери гварди генерал-лейтенанчĕ

Ют çĕршывсен интервенчĕсемпе белогвардеецсене хирĕç çапăçнă вăхăтра Совет Çарне туса йĕркеленĕ. Ун чухне совет артиллерине те туса хунă. Совет артиллерийĕ вырăссен 600 çул каялла тума пуçланă паттăр артиллерийĕн чи лайăх традицийĕсене пурне те йышăнса, аталанса пынă. Пирĕн Тăван çĕршывăн артиллерийĕ организаци енĕпе те, хĕçпăшал енĕпе те, унпа çапăçура усă курас енĕпе те хăй тĕллĕн аталаннă, урăх çĕршывсен артиллерийĕнчен вуншар çул хушши малта пынă.

Нарезной тата хăвăрт перекен тупăсене, йывăр артиллерие, миномётсене тата артиллерин нумай йышши ытти техникине Российăра чи малтан, ытти çĕршывсенчинчен малтан шухăшласа кăларнă. Ракетăлла техникăпа çапăçура усă курас ыйтусене, артиллери тупписемпе снарячĕсен проекчĕсене тăвас ыйтусене питех те тĕплĕн шухăшласа татса панă. Вырăс артиллерисчĕсене хăйсен çапăçури ăсталăхне тата хастарлăхне кура нумай ĕмĕрсем хушши мухтаса пурăннă. Анчах Октябрьти Социализмла Аслă революци пуличчен вырăс артиллерийĕ начар условисенче аталанса пынă. Промышленность кая юлнă пирки артиллерин çĕнĕ йышши техникине туса хатĕрлеме май килмен. Вырăссем артиллери енĕпе тунă паха открытисемпе изобретенисем пурнăçа кĕреймен, çав открытисемпе изобретенисене вара ют çĕршывсен çыннисем сăмсăрленсех хăйсем тунă тесе йышăннă. Çар ведомствинчи тăмсай чиновниксем авалха пек ĕçлесе пыни, малашлăха курма пĕлменни, вĕсем яланах шухăшламасăрах ют çĕршывсенчи «çĕнĕ йышши япаласене» маларах хуни артиллерие, унăн тактикипе техникине лайăхлатас ĕçе чарса тăнă.

Октябрьти Социализмла Аслă революци хыççăн тин, обществăпа государство строй ĕ улшăннă хыççăн, Тăван çĕршывăн наукипе техникине, çав шутра артиллерие те аталантарма питех те лайăх майсем пулса тăчĕç.

Граждан вăрçи совет çĕршывĕн çамрăк артиллерийĕшĕн пысăк тĕрĕслев пулчĕ, çав тĕрĕслев витĕр совет артиллерийĕ чыслăн тухрĕ. Çамрăк Совет республикине пĕтерсе хума хăтланнă Америка, Англи, Япони интервенчĕсем тата ытти çĕршывсен интервенчĕсем те совет туписем вăйлă персе çапса аркатнине тÿссе курчĕç.

Колчака, Деникина, Юденича, Врангеле хирĕç тата империалистла буржуази янă ытти çынсен çарĕсене хирĕç кĕрешнĕ чухне совет артиллерийĕ хăй умне лартнă задачăсене ăнăçлă пурнăçларĕ.

Граждан вăрçи çулĕсенчи çапăçусенче артиллерипе творчествăлла усă курса тупнă çĕнĕ майсем пурте артиллери наукине вăрçă хыççăнхи вăхăтра аталантарас ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăчĕç.

Вăрçă хыççăнхи пилĕкçуллăхсем вăхăтĕнче пирĕн çĕршывра хăватлă промышленность туса хунă. Вăл Совет Çарне, ку шутра артиллерие те, çĕнĕ техникăпа хĕçпăшаллантарма май панă. Çĕнĕ йышши артиллери—зенитнăй, танковăй артиллери тата танксене хирĕç кĕрешмелли тупăсем тунă, çĕнĕрен пысăк хăватлă тата чи хăватлă артиллери туса хунă, артиллерин çĕнĕ йышши тупписемпе хатĕрĕсене тунă, вĕсем хăйсен пахалăхĕпе ют çĕршывсен çавăн пек техникинчен нумай лайăхрах.

Капитализмла государствăсен çарĕсенче пуринчен ытла танксемпе авиацие аталантарма тăрăшнă, артиллерие тивĕçлĕ хак паман. Çавна пула нимĕçсен фашистла çарĕн артиллерийĕ тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра тĕнчери пĕрремĕш вăрçа вăхăтĕнчи пекех пулнă. Америка артиллерийĕн вара тĕнчери иккĕмĕш вăрçă пуçламăшĕнче дивизионнăй артиллери тата танксене хирĕç кĕрешмелли—Францире 1897 çулта шухăшласа кăларнă 75 миллиметрлă, унтанпа кăштах лайăхлатса çĕнетнĕ тупăсем кăна пулнă. Англи çарĕн артиллерийĕ те маларах асăннă çĕршывсен артиллерийĕпе пĕр пекех пулнă. Дюнкерк патĕнче хăйсене аркатса тăкнă хыççăн тин акăлчансем хăйсен артиллерине çĕнетме тытăннă, çак ĕçе вăрçă чарăннă тĕле çеç туса пĕтернĕ. Çапла вара, кучухнехи çарсенчен Совет Çарĕн çеç хăватлă тата кучухнехи вăрçăра пĕтĕмпех юрăхлă артиллери пулнă.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче пирĕн артиллери Совет Çарĕн тăшмана вăйлă пырса çапакан тĕп вăйĕ пулчĕ. Оборонăри хаяр çапăçусем вăхăтĕнче пирĕн артиллеристсем, ытти йышши çарсемпе пĕрле, тăшманăн техникипе салтакĕсене вăйлăн çапа-çапа аркатрĕç. Мускав патĕнчи çапăçусенчех нимĕçсен фашистла захватчикĕсен 1.500 танкне, вĕсенчен нумайăшне тупăсенчен персе пĕтерсе тăкнă. Оборонăра тăрса çапăçнă чухне тата уйрăмах танксене хирĕç çапăçнă вăхăтра пирĕн артиллери хăй тĕнчери иккĕмĕш вăрçăра вăрçнă ытти çĕршывсен артиллерийĕнчен лайăхрах пулнине уççăн кăтартса панă.

1942 çулхи ноябрĕн 19-мĕшĕнче Совет Çарĕ Сталинград патĕнче историре паллă контрнаступлени пуçласан, совет артиллерийĕ тăшман çине нихçанхинчен нумай вут-хĕм тăкрĕ, тăшмана вăйлă çапрĕ, хамăрăн пехотăпа танксене малалла кайма çул уçса пачĕ. Гитлеровецсен 330 пин çынлă çарĕ таврра тимĕр уннă пулса тăчĕ, çав ункăран тăшманăн пĕр салтакĕ те тухса тарма пултараймарĕ. Кайрахпа çак историллĕ вăхăта аса илме Артиллери кунне уявламалла турĕç.

Совет Çарĕн наступленийĕсем вăхăтĕнче артиллери хăйĕн вут-хĕмĕпе тăшман оборонине арката-арката тăкрĕ, пехотăпа тата танксемпе пĕрле çапăçса пычĕ. Вăл Совет Çарне 1943—1944 çулсенчи çапăçусенче нимĕçсен фашистла çарне аркатса тăкма пулăшрĕ. Вăрçăн юлашки тапхăрĕнче, пирĕн çарсем Висла шывĕ патĕнче, Хĕвелтухăç Пруссире, Будапештпа Вена районĕсенче, Одер шывĕ патĕнче çапăçнă вăхăтра тата Берлин патĕнчи çапăçусенче совет артиллерийĕн хăвачĕ уйрăмах уççăн палăрчĕ.

Япони империализмне аркатса тăкпă чухне те совет артиллерийĕ хăйĕн вăйне кăтартрĕ. Империализмла Японин тĕп çарне—миллион çынлă Квантунски çара çапса аркатма пирĕн çара совет артиллерийĕ пулăшрĕ.

Тылри ĕçченсем паттăр ĕçлени Совет Çарĕпе унăн артиллерине пысăк та чаплă çĕнтерÿсем тума май пачĕ. Пирĕн çĕршывра хĕçпăшал туса кăларасси тăтăшах ÿссе пынă. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет артиллерийĕ пилĕк хут ытла ÿснĕ. Вăрçă пынă юлашки виçĕ çул хушшинче артиллерин вăйлă аталаннă промышленноçĕ кашни çулах фронта орудисемпе миномётсем 200 пин таран парса тăнă, Сталинград патĕнчи контрнаступлени 5.000 яхăн орудипе миномёт вут-хĕм тăкнипе пуçланнă пулсан, юлашки çапăçăва — Берлин патĕнчи çапăçăва 41.000 ытла орудипе миномёт хутшăннă.

Пирĕн промышленность фронт валли боеприпассем çителĕклĕ парса тăнă. 1944 çулта снарядсем, бомбăсем тата минăсем 240 миллион—патша Российинчи промышленность тĕнчери пĕрремĕш вăрçă вăхăтĕнче туса кăларнинчен икĕ хут нумайрах туса хатĕрленĕ.

Пирĕн Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи тата тылри мĕнпур çĕнтерÿсене Совет Союзĕнчи Коммунистсен мухтавлă партийĕ хавхалантарса тата организацилесе пычĕ. Коммунистсем совет çыннисене вăрçăра паттăр çапăçма тата ĕçре паттăр ĕçлеме хавхалантарчĕç. Вĕсем наступлени тăвакан воинсен малти речĕсенче пычĕç. Хăюллă тата хастарлă пулса, нихçанхинчен паттăр çапăçса, вĕсем воинсене çĕнтерÿсем тума хавхалантарса пычĕç.

Совет артиллерисчĕсем Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче совет халăхĕпе Коммунистсен партийĕн шанăçне пурнăçа кĕртрĕç. Вĕсен паттăрлăхĕпе хастарлăхне Тăван çĕршыв пысăка хурса хакларĕ. Аслă Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăр çапăçнăшăн Совет Çарĕн артиллерисчĕсенчен 1.800 çын ытла—салтаксем, сержантсем, офицерсем тата генералсем Совет Союзĕн Геройĕ ятне илчĕç. Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче артиллеристсенчен 1.200 пин çынна Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсене парса наградăланă.

Вăрçă хыççăнхи çулсенче, Коммунистсен партийĕ тата Совет правительстви яланах хытă тăрăшнипе, совет артиллерийĕ малалла лайăхланса пычĕ. Артиллерие çĕнĕ йышши техникăпа хĕçпăшаллантарнă. Аслă Отечественнăй вăрçă опычĕне тĕплĕн тĕпчесе вĕреннĕ тăрăх артиллерипе çапăçура усă курмалли лайăх, малти вырăнта тăракан майсене палăртнă, артиллерипе лайăхрах усă курмалли меслетсене тупса йĕркеленĕ.

Вăрçă пуçарма тăрăшакансен киревсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларас политикăна, мире сыхласа хăварас тата тĕреклетес политикăна Совет Союзĕ яланах çирĕппĕн пурнăçласа пырать. США-ри реакциллĕ çынсен, этемлĕхе тĕнчен çĕнĕ вăрçин хăрушлăхне кĕртсе яма тăрăшакан çынсен ушкăнĕсем пуç пулса тăракан империализмла лагерь енчен тапăнас хăрушлăх пуррине Совет Союзĕ шута илет. Çавăнпа та, — тенĕ Г. М. Маленков юлташ СССР Верховнăй Совечĕн пилĕкмĕш сессийĕнче каланă сăмахра,—«мир ĕçĕшĕн çине тăрса кĕрешсе, пирĕн çав вăхăтрах аслă Совет Союзĕн оборонине ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетсе лайăхлатас тĕлĕшпе хамăрăн чи таса тивĕçе çирĕп асра тытмалла. Кам та пулин, ăсран тухса, пирĕн Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне пăсма хăтланасран сыхланма эпир çавăн пек тума тивĕç. Вăрçă кăларакан тĕрлĕ авантюристсемпе провокаторсен вĕри пуçĕсене сивĕтме тата вĕсене социализмла çĕнтерÿсене, Совет Союзĕн вăй-хăватне хисеплеме вĕрентме совет çыннисен кирек хăçан та хатĕр пулмалла».

Совет артиллерисчĕсем малашне те хăйсен ăсталăхне ÿстерсе, дисциплинăна çирĕплетсе, чăссемпе подразделенисене çапăçма вĕрентес ĕçе вăйлатса пыма пур енчĕн те хатĕр. Çапла вара вăрçă пуçарма тăрăшакансем совет халăхĕн мирлă ĕçне кирек мĕнле майпа пăсма хăтланнине те кирек хăш самантра та отпор пама пултăр.

Совет кинофильмĕсене юратса пăхаççĕ

ШАНХАЙ, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Китай халăхĕн культурăллă пурнăçĕнче совет киноискусствин произведенийĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Совет кинофильмĕсене пысăк хуласенчи кинотеатрсенче ялан тенĕ пекех кăтартаççĕ. Фабрикăсемпе заводсенче, чи инçетри ялсенче те совет кинофильмĕсене кăтартаççĕ. Чунцинри «Синьхуажибао» хаçат Кăнтăр-Хĕвеланăç Китайри ĕççыннисем совет кинофильмĕсене курма юратнине паллă тăвать. Кунта юлашки çул хушшинче ялсенчи, фабрикăсемпе заводсенчи киносеансене 20 миллион çын ытла пырса курнă. Хуласенчи кинотеатрсенче совет кинофильмĕсене 18 миллион çын ытла пырса курнă.

«Синьвэньжибао» хаçат çапла пĕлтерет: Октябрь революцийĕ 36 çул тултарнă май Шанхайра совет фильмĕсене нумай кăтартнă, вĕсене курма халăх нумай çÿренĕ. Ноябрĕн 7-мĕшĕпе 16-мĕшĕ хушшинче «Далеко от Москвы», «Свет в Коорди», «Во льдах океана», «Арена смелых» тата ытти кинофильмсене унта 700 пин çын ытла курнă. Шанхайри ĕççыннисем ыйтнипе «Далеко от Москвы» тата «Во льдах океана» фильмсене тата темиçе кун хушши кăтартма йышăннă.

ГЕРМАНИПЕ СОВЕТ СОЮЗĔ ХУШШИНЧИ ТУСЛĂХ УЙĂХЛĂХĔ

БЕРЛИН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Германи Республикинчи хуласемпе ялсенче Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх уйăхлăхĕ ăнăçлă иртет. Уйăхлăх иртнерĕ май Демократиллĕ Германи Республикине Совет Союзĕн делегацийĕсем пынă. Вĕсем республикăри ĕççыннисемпе тĕл пулаççĕ. Совет деятелĕсем Совет Союзĕнчи халăхсен пурнăçĕпе ĕçри çитĕнĕвĕсем çинчен, социализмла государствăри наукăпа техникăн ÿсĕмĕсем çинчен тунă докладсемпе лекцисене нимĕç халăхĕ питĕ интересленсе итлет.

Константинов профессор ертсе пыракан делегацири совет ученăйĕсен ушкăнĕ Демократиллĕ Германи Республикинче пулнă вăхăтра 90 доклад туса панă, ĕççыннисемпе ирттернĕ нумай калаçусене хутшăннă. Совет Союзĕнчи наукăпа культура деятелĕсем тухса каланине 40 пин çын ытла итленĕ.

Германипе Совет Союзĕ хушшинчи туслăх обществин членĕсен шучĕ ÿссех пырать. Уйăхлăхăн малтанхи икĕ эрни хушшинче кăна 32.242 çын общество члене кĕнĕ.

МОНГОЛИ ХАЛĂХ РЕСПУБЛИКИ 29 ÇУЛ ТУЛТАРАС УМЕН

УЛАН-БАТОР, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Унэн» хаçат çапла пĕлтерет: Монголири Революцилле Халăх партийĕн Центральнăй Комитечĕн решенийĕ тăрăх маршал Чойбалсан Сурт-музейĕнчен Сухэ-Батор—Чойбалсан музейĕ туса хунă. Музейра Сухэ-Баторăн пурнăçĕпе ĕçне кăтартса паракан экспонатсем, халăх революцине хатĕрленнине тата Сухэ-Баторпа Чойбалсан ертсе пынипе Монголири Революциллĕ Халăх партийĕ 1921—1924 çулсенче революцилле халăх влаçне тĕреклетессишĕн тата Монголи Халăх Республикине туса хума хатĕрленессишĕн пынă кĕрешĕве кăтартса паракан документсемпе фоторепродукцисем çĕнĕрен нумай тăратнă.

Монголи Халăх Республикине туса хунăранпа ноябрĕн 26-мĕшĕнче 29 çул тултарать. Çавна май Сухэ-Батор—Чойбалсан музейне пырса куракансен шучĕ ÿснĕ. Музея кунсерен çĕршер хресченсемпе рабочисем тата интеллигенци представителĕсем пыраççĕ.

ПРАВИТЕЛЬСТВО ДЕЛЕГАЦИЙĔ ИРĔКЕ КĂЛАРНĂ ЗОНĂНА ПЫРСА КУРНĂ

ШАНХАЙ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Вьетнамри информаци агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Вьетнам халăх правительстви нумаях пулмасть ирĕке кăларнă çурçĕр-хĕвеланăçĕнчи зонăна делегаци янă. Вăл зонăра, тĕпрен илсен, вак халăхсем пурăнаççĕ. Делегацие ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хоанг Минь Зиам ертсе пынă.

Çурçĕр-Хĕвеланăç Вьетнамри ĕççыннисем нумай çулсем хушши Францин колониалле захватчикĕсен пусмăрĕнче пурăннă. Вĕсем халăх правительствин делегацине пысăк савăнăçпа кĕтсе илнĕ. Вак халăхсен представителĕсем, вăл шутра таи, муонг, мео, пуок тата ытти халăхсен представителĕсем, пухусемпе тĕлпулусем ирттернĕ.

Çурçĕр-Хĕвеланăçĕнче пурăнакансем хăйсен пĕрлĕхне тата ытларах çирĕплетме, империалистсене хирĕç пыракан кĕрешĕве активлă хутшăнма сăмах панă.

ИНДИРИ ОБЩЕСТВЕННОСТЬ ИНДИПЕ СОВЕТ СОЮЗĔ ХУШШИНЧИ СУТУ-ИЛĔВЕ САРСА ПЫРАССИШĔН ТĂРАТЬ

ДЕЛИ, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Индири общественность Индипе Совет Союзĕ хушшинчи суту-илĕве сарса пырассишĕн тăннине палăртать.

Делире тухса тăракан «Вишвамитра» хаçат редакци статьинче çапла çырать: «Совет Союзĕпе Инди хушшинчи суту-илÿ сыхăнăвĕсене тепĕр хут тунине Индире кăмăлласа кĕтсе илĕç».

Бенгалири «Свадхината» хаçат паллă тунă тăрăх, «Индипе Совет Союзĕ хушшинчи суту-илÿ договорĕ пире хальхи вăхăтри экономика кризисне пĕтерме пулăшĕ. Индие чечеклентерес çĕрте пысăк ĕç туни пулса тăрĕ. Çавăн пирки Индире пикан та никĕленмест».

Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене хирĕç!

БЕРЛИН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). АДН агентстви çапла пĕлтерет: ноябрĕн 18-мĕшĕнче Рейникендорф районĕнче Берлинăн Франци çарĕсем оккупацилесе тăракан секторти миршĕн кĕрешекенсен конференцийĕ пулса иртнĕ. Конференцире пулнисем Парижри ĕççыннисене чĕнсе каланă. Унта çапла каланă: Корейăри вăрçă ĕçĕсем чарăннă хыççăн тата миршĕн тăракансем тăрăшнипе пула, Европăри халăхсем, вăл шутра нимĕç халăхĕ те, çакна ĕненсе требовани лартаççĕ: тĕнчери йывăр лару-тăрăва çăмăллатмалла, Германи ыйтăвне мирлĕ майпа демократиллĕ никĕс çинче татса памалла.

Хĕвеланăç Берлинри миршĕн кĕрешекенсем çакна паллă тăваççĕ: хĕвеланăçĕнчи державăсем тата Бонн влаçĕсем Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тата Хĕвеланăç Германие Американ çар пакчĕсен системине кĕртессишĕн тăрăшни Европăра мирлĕ килĕшÿ тума тата Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама чăрмантарать. Чĕнсе каланинче çапла каланă: Хĕвеланăç Германире милитаризм тепĕр хут çĕкленни Германи кÿршисемшĕн тата нимĕç халăхĕшĕн çĕнĕ вăрçă хăрушлăхне вăйлатать.

Эпир, Берлинăн Франци çарĕсем оккупацилесе тăракан секторĕнчи миршĕн кĕрешекенсен совечĕсен членĕсем, кăтартса панă чĕнсе каланинче, Франци халăхĕ «Европа çарне» тăвасси çинчен тунă договора çирĕплетессине хирĕç тăнине ырлатпăр. Вăл договор пĕтĕм тĕнчери мире хăратса тăрать. Чĕнсе каланинче агрессиллĕ Çурçĕр Атлантика пактне хирĕç, «Европа çарне» хирĕç, демократиллĕ тата мире юратакан Германипе мирлĕ договор тăвассишĕн пĕрлешсе кĕрешме чĕнсе каланă.

Агентство çапла пĕлтерет: миршĕн тăракансем ноябрĕн 18-мĕшĕнче Хĕвеланăç Берлинри мĕнпур районсенче плакатсем çыпăçтарса тухнă. Плакатсем Бонра тата Парижра тунă çар договорĕсене хирĕç кĕрешме чĕнеççĕ.

Бельгири депутатсен палатинче „Европа çарĕ“ çинчен тăракан ыйтăва сÿтсе явни

БРЮССЕЛЬ, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 18-мĕшĕнче Бельгири депутатсен палатинче «Европăри оборона пĕрлешĕвĕ» çинчен тунă договора çирĕплэтесси çинчен тăракан ыйтăва малалла сÿтсе явнă.

Независимăй социалистка Изабелла Блюм çак договора хытă критикленĕ. Европа çарĕ майлă тăракансене Блюм çапла каланă: реваншистла Германие хĕçпăшаллантарни пирĕншĕн пĕртен-пĕр хăрушлăх пулса тăрать, мĕншĕн тесен, тепĕр хут «аслă Германи» тума тата унăн ĕлĕкхи территорийĕсене каялла тавăрса пама шутлаççĕ. Европăри оборона пĕрлешĕвĕ Европăна хÿтĕлес ĕçшĕн тăма пултараймасть, ăна, чи малтанах, «аслă Германие» тепĕр хут тăвас тесе организацилеççĕ. Çак договора йышăнсан, эпир Германие хĕçпăшаллантарнипе килĕшетпĕр, эсир Бельги çарне Аденауэр аллине паратăр. Ку вăл мире хăратса тăрать.

Ют çĕршыв ĕçĕсен министрне Ван Зееланда Блюм çапла каланă:

Европăри оборона пĕрлешĕвне туни пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Мĕншĕн-ха пире çак договора çирĕплетме васкатаççĕ? Германи ыйтăвне мирлĕ майпа татса пама пилĕк аслă державăн канашлăвне пухассине пулăшас тĕллевпе мĕншĕн-ха пирĕн мораллĕ вăйсемпе усă курмаççĕ?

Европăри оборона пĕрлешĕвĕ çинчен тунă договора эсир халăх шухăш-кăмăлне ыйтмасăр çирĕплетме шутлани чи пысăк хăрушлăх пулса тăрать. Эпир предприятисенче рабочисен шухăш-кăмăлне ыйтса пĕлтĕмĕр. Ĕççыннисенчен ытларахăшĕ çак пĕрлешĕве хирĕç тăнине палăртрĕ.

Юлашкинчен Блюм çакăн пек резолюци сĕннĕ:

«Европăри оборона пĕрлешĕвне тăвасси çинчен калакан договор пирĕн çĕршыва 50 çуллăха илнĕ обязательствăсемпе çыхăнтарнине шута илсе, депутатсен палати çак договора çирĕплетессине тепĕр вăхăта хăварма йышăнать, çак ыйтăва парламентăн черетлĕ суйлавĕсене ирттернĕ хыççăн пăхса тухма сĕнет».

Депутатсен палатин председателĕ Ван Каувелерт çак сĕнĕве хирĕçленĕ. Договора çирĕплетессине тепĕр вăхăта хăварасси çинчен панă сĕнĕве палата сирсе янă ĕнтĕ, тенĕ вăл.

Блюм çапла ответ панă: Спаакăн сÿлте асăннă сĕнĕвĕ договора çирĕплетессине пăхса тухассине урăх сăлтавсем тăрăх, виç-тăватă эрнене кăна каярах хăварма палăртать. Блюм хăйĕн сĕнĕвне сасăлаттарассишĕн çине тăнă. Депутатсен палатин вице-председателĕ Жорис либерал тата Де Влесховер, (социальнăй-христианла парти) çавăн пекех договора çирĕплетессине хирĕç тăнă.

Жорис уйрăммăнах çакна палăртнă: договор проектне пăхса тухни пĕтĕм влаçпа пусарулăх тăхăр комиссар аллинче пулмаллине çирĕплетсе парать. Унсăр пусне, Европăри оборона пĕрлешĕвне кĕнĕ пĕр государствăн та, чăннипе илсен, наци оборони министрĕ пулмасть. Пирĕн çĕршыври çынсен мĕн чухлĕ юн юхтармаллине ют çĕршыв çыннисем палăртма тытăнсан, Бельги государствинчен мĕн тăрса юлĕ?—тесе ыйтнă вăл.

Ку пĕрлешÿ, тенĕ Жорис, пирĕн нацин никама пăхăнманлăхне çухатассине, пирĕн çамрăксене Бельги дивизийĕсен шутĕнче нимĕç çарĕсене кĕртессине, вĕсене çухатассине пĕлтерет.

Рей либерал, Дежардэн социалист тата ыттисем договора çирĕплетессишĕн тухса каланă.

Англири общинăсен палатинче

ЛОНДОН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Паллă ĕнтĕ, Англире хальхи вăхăтра Американ 30 пине яхăн салтакĕпе офицерĕсене вырнаçтарнă. Вĕсем çĕршывăн тĕрлĕ пайĕсенче Американ виçĕ теçеткене яхăн сывлăш-çар базисенче тăраççĕ. Америкăпа Англин хĕçпăшаллă вăйĕсем иртерекен вĕренÿсене пула, Англи халăхĕ час-часах сиен курать. Çавна пула Англи общественноçĕн анлă сийĕсем тĕрĕссипех тарăхаççĕ.

Ноябрĕн 19-мĕшĕнче общинăсен палатинче парламент членĕсен ушкăнĕ Америкăпа Англи самолечĕсем вĕрентÿ вăхăтĕнче Солтфлит ялĕ çине (Линкольншир) темиçе хутчен бомбăсем пăрахнине хирĕç протестленĕ. Осборн консерватор ял пысăк сиен курни çинчен каланă.

Дж. Тэйлор лейборист çапла пĕлтернĕ: Американ çар çыннисенчен вĕсем «бомбăсем пăрахас ĕçпе хăйсен килĕсенче хăтланччăр тесе ыйтас пулать», тенĕ.

Негрсене вĕлернине хирĕç протестлеççĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Англи правительстви Бенири Кикуйю йăхĕнчи негрсене хирĕç кĕрешме бомбардировщиксемпе усă курасси çинчен решени йышăннă май, общинăсен палатин членĕсен ушкăнĕ ноябрĕн 18-мĕшĕнче çак решение хирĕç протестлени çинчен пĕлтернĕ. Колонисен министрĕ Литтлтон каланинчен çакă паллă: Англи влаçĕсем негрсене пурăнма юраманни çинчен пĕлтернĕ мĕнпур районсем çине ним уяса тăмасăр бомбăсем пăрахмалла. Англи влаçĕсем каланă тăрăх, çак районсенче Кикуйю йăхĕн нумай членĕсем пытанса пурăнаççĕ.

Депутат-лейбористсем çакна кăтартса панă: негрсем çине çакăн пек бомбăсем пăрахни хĕрарăмсемпе ачасене йышлăн вĕлернине пĕлтерет.

Мосаддыка суд туни

ТЕГЕРАН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Мосаддыкпа Иран çарĕн генеральнăй штабĕн начальникĕ пулнă Рияхи генерал ĕçне пăхса тухакан çар сучĕ ĕнерхи ларăвĕнче прокурор хăйĕн сăмахне малалла каланă.

Ирхи лару пуçланнă чух Мосаддык хăйне сăмах пама ыйтнă. Вăл прокурор хăйне айăпласа каланине хирĕç ответлесе каласшăн пулнă. Мосаддык хăйĕн пурнăçĕшĕн хăрушлăх пурри çинчен пĕлтернĕ.

Суд председателĕ ăна хирĕç çапла каланă: Мосаддык «хăй вăхăтĕнче» калĕ, тенĕ.

Прокурор çапла пĕлтернĕ: Мосаддыкăн тата ăна хÿтĕлекенĕн ăна (прокурора) хăйсен шухăш-кăмăлне суд ларăвĕ пыман вăхăтра каласа памалла. Ун пек тумасан, Мосаддыка «яланхи пек камерăна» куçарасси çинчен кăтарту парăп, тенĕ.

Мосаддык прокурор асăрхаттарнине хирĕç çапла каланă: вăл ниçта та каймĕ тата апат йышăнма пăрахĕ.

Çитес лару ноябрĕн 21-мĕшĕнче пулать.

Террористла организаци членĕсене суд тунă

ПЕКИН, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Синьхунаньбао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Хунань провинцийĕнче обществăлла хăрушсăрлăхăн органĕсем, ĕççыннисем пысăк пулăшу панипе пула, «Наньгундао» ятлă реакцилле организацие тĕп тунă. Вăл организацие гоминдан çарĕн офицерĕсем пулнă Ли Сян-лань, Хуан Чжэнь-хуа тата ыттисем те ертсе пынă пулнă. Организаци сăтăрла ĕç, халăх влаçĕн органĕсен ĕçĕсене хирĕç саботаж тунă, провокациллĕ хыпарсем сарнă, правительствăра ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлекен работниксене тата халăх хушшинчи активистсене вĕлерме хатĕрленнĕ.

Халăх сучĕ «Наньгундао» организаци пуçлăхĕсене персе вĕлерме, çак реакцилле террористла организацийĕн участникĕсене чĕрлĕ срокла тĕрмене хупма приговор йышăннă. Провинцири ĕççыннисем суд решенине кăмăлласа кĕтсе илнĕ.

Чилири забастовкăсем

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин корреспонденчĕ Сант-Ягоран пĕлтернĕ тăрăх, Чилири 20 пин учителĕн ултă эрне хушши пынă забастовки çĕнтерÿпе вĕçленнĕ. Правительство учительсен пурнăç условийĕсене лайăхлатма мерăсем йышăнма сăмах панă.

Чрезвычайнăй лару-тăру туса хунă

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Монтевидеори радио пĕлтернĕ тăрăх, Чили столицинче паянтан пуçласа чрезвычайнăй лару-тăру туса хунă. Пĕтĕм Сант-Яго провинцийĕнче çавăн пек йĕрке пулать. Правительство çакăн пек йĕркене акă мĕншĕн йышăннă: государство предприятийĕсенчи рабочисен руководителĕсем ноябрĕн 20-мĕшĕнче забастовка тăвасси çинчен пĕлтернĕ. Правительство пĕтĕмĕшле забастовка пуçланса каясран хăранă. Забастовкăна пĕтĕм çĕршыври шкулсемпе институтсенчи 20 пин преподавателĕн кĕрешĕвне пулăшас шутпа пуçласси çинчен пĕлтернĕ пулнă.

Радио çапла пĕлтерет: Сант-Яго провинцийĕнчи чикĕре тăракан çарсем те забастовка тăваççĕ.

АМЕРИКА ГОМИНДАНОВЕЦСЕНЕ ПУЛĂШАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, тинĕс-çар вăйĕсен штабĕн начальникĕ Кэрни адмирал виçĕ эрне хушши Инçет Хĕвелтухăçĕнче çÿресе таврăннă хыççăн пресс-конференцире çапла пĕлтернĕ: США-н тинĕс-çар флочĕ часах гоминдановецсене икĕ эсминец парать.

Американецсем Гренландире хуçаланаççĕ

КОПЕНГАГЕН, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсем чылай вăхăт хушши ĕнтĕ Гренландире хуçаланаççĕ. Данин çĕнĕ конституцийĕ тăрăх Гренланди Дани территорийĕн пайĕ пулса тăрать пулин те, американецсем Гренландирен, тĕрĕссипе илсен, хăйсен бази туса хунă. Ĕç çакăн патнех çитсе тăнă: датчансен Гренландири хăйсен аэродромĕсемпе усă курма американецсенчен ыйтас пулать. Çапла, «Информашон» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, чылай вăхăт хушши калаçнă хыççăн кăна Дани—Швеци—Норвегин Скандинаври «Сас» ятлă авиаци концернне Гренланди хĕвеланăçĕнчи çыранĕнче вырнаçнă Сĕнре-Стрĕмфьорд аэродромĕпе усă курма, Скандинаврен США-на тата Японие вĕçмелле чухне çав концернăн самолечĕсене анса ларма ирĕк панă. Анчах американецсем «Сас» концерна çав тĕллевсемпе Туле авиабазипе (Çурçĕр Гренланди) усă курма ирĕк паман. Хаçат çырнă тăрăх, Туле урлă вĕçсе иртме 6—10 сехет сахалтарах вăхăт кирлĕ.

«Ланд ог фольк» хаçат çакна паллă тăвать: Сĕнре-Стрĕмфьорд аэродром, Тулери аэродромпа танлаштарсан, транзитнăй пункт тума начартарах. «Анчах, —тесе çырать хаçат,—Американ Гренландири çар интересĕсем Скандинаври ĕççыннисен интересĕсенчен çÿлте тăраççĕ».

АМЕРИКА ÇАР ÇЫННИСЕН ЯПОНИРИ ИРСĔР ĔÇĔСЕМ

ШАНХАЙ, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Японири Биодо Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Американ пĕрремĕш мотомеханизированнăй дивизийĕнчи 8-мĕш полкри Джеймс Овертон капрал Саппоро хулин урамĕсенчен пĕринче Япони чиновникне йывăр амантнă.

Унтан маларах Америка салтакĕ Денис Гэнни, Майдзуру хулинчи пĕр японец суртне пырса кĕрсе кил хуçи хĕрарăмне пусмăрлама хăтланнă.

ЯПОНИЕ ТЕПĔР ХУТ ХĔÇПĂШАЛЛАНТАРАССИНЕ ХИРĔÇ

ШАНХАЙ, ноябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин Токиори корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Токиора нумай çынлă митинг пулса иртнĕ. Темиçе çĕр студент Японие тепĕр хут хĕçпăшаллантарассине хирĕç протестлесе демонстраци тунă. Митингра Японие тепĕр хут хĕçпăшаллантарассине тата çар повинноçне хирĕç, Посида правительстви Японири студенчĕсен суйлав прависене хĕснине хирĕç протестлекен резолюцисем йышăннă. Митинг хыççăн студентсем Токио урамĕсем тăрăх плакатсем йăтса пынă. Плакатсем çинче США-н вице-президенчĕ Никсон Японие пынине хирĕç протестлесе çырнă пулнă.

АВСТРИРЕ ĔÇСĔРЛĔХ ÿСЕТ

ВЕНА, ноябрĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Парламентăн пичет службийĕ пĕлтернĕ тăрăх, Австрин социальнăй обеспечени министрĕ, сылтăм социалист Майзель парламентăн бюджетпа финанс комитечĕн ларăвĕнче тухса каланă. Вăл пĕлтернинчен çакă паллă: çĕршывра ĕçсĕрлĕх çултан-çул ÿссе пырать. 1951 çулхи октябрь вĕçленнĕ тĕле шута илнĕ тăрăх ĕç тупайманнисем 72 пин çын, 1952 çулхи октябрь вĕçĕнче—128 пин çын, кăçалхи октябрь вĕçленнĕ тĕле 137 пин çын пулнă.

Кашни киле хаçат-журнал!

АГИТАТОРСЕН ЧЫСЛĂ ĔÇĔ

ЙĔПРЕÇ. Хаçат-журнал çырăнса илессипе, ăна ĕççыннисем хушшине сарасси — агитаторсен чыслă тивĕçĕ. Хаçат-журналсăр халăх хушшинче ĕçлеме май çук. Эпĕ кăçал Мускавра, хамăр республикăра тата районта тухса тăракан хаçатсемпе журналсене пурĕ 9 экземпляр илсе тăратăп. Чылайăшĕ эпĕ хаçат нумай илнинчен тĕлĕнеççĕ. «Мĕне кирлĕ ун чухлĕ хаçат çырăнса илни, пурне те пурпĕр вулама май çук», теççĕ. Хăшĕсем тата, вулав çурчĕ çине шанса, хаçат-журнал çырăнса илмеççĕ. Ку вăл тĕрĕс мар.

Эпĕ хаçат-журнала пĕччен çеç вуламастăп, ăна халăх хушшинче те вуласа пама тăрăшатăп. Пирĕн, агитаторсен, ватă çынсем, комсомолецсем, шкул ачисем е тата уй-хир бригадисенче, фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче ĕçлемелле. Кунта, паллах, пĕр тĕрлĕ материалпа усă курни çителĕксĕр. Ферма работникĕсемпе калаçу ирттернĕ чухне «Сельское хозяйство», çамрăксемпе комсомолецсем хушшинче—«Комсомольская правда», «Çамрăк коммунист» хаçатсенчи материалсемпе усă курни вырăнлă.

Агитацилле-массăллă ĕçре халăх хушшине ытларах хаçат-журнал сарни пысăк вырăн йышăнать. Кашни çын хаçат çырăнса илсе, ăна йĕркеллĕ вуласа пырать пулсан, агитаторсен ĕçĕ чылаях çăмăлланать.

Эпĕ халăх хушшине хаçат-журнал ытларах сарма тăрăшатăп. Çитес çулта илсе тăма «Сельское хозяйство», «Пионерская правда», «Коммунизм ялавĕ», «Çамрăк коммунист», «Коммунизм çĕнтерĕвĕшĕн» хаçатсем, «Ветеринария», «Ялав», «Тăван Атăл» журналсем тата «Агротехсоветы колхозам» ятлă плакат çырăнтăм. Колхозниксем хушшинче 68 экземпляр тĕрлĕрен хаçат-журнал сартăм. Ку ĕçе малалла та туса пыратăп. Эпĕ çитес çулта илсе тăма 100 экземпляртан кая мар хаçат-журнал саратăп.

Н. КУДРЯВЦЕВ,
Упакассинчи ветеринари пункчĕн заведующийĕ.

Натуралист блокнотĕнчен

Ноябрь уйăхĕ çитрĕ. Хĕвел сайра хутра çеç курăнкалать. Çанталăк сивĕ тăрать, юр çăвать. Шыв-шурсемпе пĕвесем пăрпа витĕнчĕç. Витĕр илекен сивĕ çил юманăн юлашки çулçисене тата-тата антарать. Нумай çул ÿсекен хыр йĕпписем те ÿкеççĕ.

Чĕрчунсем те хĕле кĕтсе илме хатĕрленеççĕ. Сивве чăтайман кайăксем кăнтăр еннелле вĕçсе кайнă. Çав вăхăтрах пирĕн пата çурçĕр енче пурăнакан ытти кайăксем—уйăпсемпе çирĕктăррисем вĕçсе килнĕ. Чакаксемпе кăсăясем вăрмансенчен ял çывăхнелле куçаççĕ.

Пирĕн вăрмансенче пурăнакан тилĕ, мулкач, пăсара, ăтăр тата ытти чĕрчунсем хăйсем валли апат тупса тăранса пурăнаççĕ. Упа, пурăш, сăвăр, тыркас хăйсен ăшă шăтăкĕсене кĕрсе выртаççĕ. Кăшлакан чĕрчунсенчен пĕчĕкреххисем—арлансемпе шăшисем кĕркунне хăйсем валли апат хатĕрлеççĕ. Шăшисем, сăмахран, кашни 4—5-шер килограмм, йĕкехÿресем унтан ытларах, арлансем пăт е унтан та ытларах тĕрлĕ апат хатĕрлеççĕ. Çапла вара çак чĕрчунсем халăх хуçалăхне пысăк сиен кÿреççĕ.

Атăл шывĕ сивĕнет. Атăл тăрăх тăвалла Каспи тинĕсĕнчен осетр, белуга, севрюга пулăсем хĕл каçма килеççĕ. Вĕсем Атăлти е Сăрти тарăн вырăнсенчи шăтăксенче вырнаçаççĕ. Вырăнти пулăсем те ушкăнăн-ушкăнăн пуханса хĕл каçма хÿтĕ вырăнсем тупаççĕ. Хĕле кĕрес умĕн пулăсем нумай çиме тăрăшаççĕ, çу пухаççĕ. Çак çу вĕсене хĕл тăршшĕпех пурăнма пулăшать. Шампа пулă ытти пулăсем пек мар. Вăл çуллахи шăрăх кунсенче шыв тĕпĕнчи тарăн йăвара выртать, сивĕтме пуçласанах йăваран тухать.

Ноябрь уйăхĕнче нумай чĕрчунсем хăйсен çуллахи çăмĕсене тăкса пĕтереççĕ. Мамăк çăмлă чĕрчунсем хĕллехи тумпа витĕнеççĕ.

Пирĕн республикăра мамăк çăмлă чĕрчунсем питĕ нумай тытаççĕ. Ку вăл государствăна пысăк тупăш парать. Çавăнпа та çак чĕрчунсене тытнă чухне сунара çÿремелли йĕркесене çирĕп пурнăçласа пырас пулать. Çак чĕрчунсене малашне те йышлăн ĕрчетме тăрăшмалла. Калас пулать, хавлă йышши чĕрчунсене, сăмахран, хăнтăрсемпе лоçсене тата ондатрăсене пачах тытма юрамасть. Колхоз хуçалăхне сиен кÿрекен çăткăн чĕрчунсене—кашкăрсемпе рыссене кирек хăш вăхăтра та тата пур майсемпе те тытма тăрăшмалла.

П. ЧУГУНОВ.

Тĕрĕслеме янă çырусем тăрăх

Канаш районĕнчи Жданов ячĕпе тăракан колхозри ситменлĕхсем çинчен «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцине çырусем килнĕччĕ. Вĕсенче колхоз тимĕрçисене ĕçлесен те, ĕçлемесен те ĕçкунĕсем пĕр пекех çырса панине, ревизи комиссийĕ ĕçлеменнине тата ытти ситменлĕхсене кăтартса панăччĕ.

Канаш районĕнчи ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ çырусенче ситменлĕхсене пĕтĕмпех тĕрĕс кăтартса панă, вĕсене пĕтересси çинчен колхоз правленийĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă, ревизи комиссийĕн ĕçне йĕркелеме пулăшма инструктор-бухгалтера янă, тесе пĕлтерчĕ.

* * *

Калинино районĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхозра агитацилле-массăллă ĕçе тивĕçлипе организацилеменни çинчен çырнă заметкăна «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ КПСС Калинино райкомне янăччĕ.

Райкомăн пропагандăпа агитаци пайĕ заметкăра фактсене тĕрĕс кăтартса пани çинчен пĕлтерчĕ. Буденный ячĕпе тăракан колхозра агитацилле-массăллă ĕçе лайăхлатасси çинчен райком бюровĕн ларăвĕнче сÿтсе явнă, партин пуçламăш организацине ĕçре пулăшма çак колхоза райком пропагандистне янă.

* * *

Вăрмар районĕнчи «Гигант» колхозра сысна витисене юсаманни çинчен пĕлтерекен çырăва «Коммунизм ялавĕ» хаçат редакцийĕ Вăрмар районĕнчи ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленине тĕрĕслеме янăччĕ.

Ялхуçалăхĕпе хатĕрлев управленийĕ çырура кăтартнă фактсем тĕрĕс пулни çинчен пĕлтерчĕ. Колхоз правленине çырура кăтартнă ситменлĕхсене пĕтерме, выльăх-чĕрлĕх витисене çак кунсенчех юсаса çитерме хушнă.

ШКУЛ ПАХЧИНЧЕ

ЭЛĔК. Тенири çичĕ çул вĕренмелли шкулти биологи преподавателĕ М. Лукин юлташ Чăваш республикинчи çанталăк условийĕнче арбуз ÿстерес тĕлĕшпе çирĕм çул ĕçлет.

Майăн 20-мĕшĕ тĕлне тăватшар çулçа ларнă арбуз калчисене çерем татăкĕпе пĕрлех хатĕрленĕ çĕр лаптăкĕ çине куçарса лартнă. Калчасене куçарса лартнă хыççăн тата чечеке ларсан кайăк-кĕшĕк тислĕкĕн шĕвекĕпе шăварнă. Çумкурăксенчен тасатса кăпкалатнине тата вăхăтра ăшă шывпа шăварнине пула малтанхи арбузсем августăн 1-мĕшĕ тĕлне пиççе çитнĕ.

С. ТИХОНОВ.

Редактор заместителĕ
М. Н. ЯКИМОВ.

ТЕАТР
ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 22-мĕшĕнче кăнтăрла вырăсла спектакль «Вей, ветерок», каçхине—чăвашла спектакль «Юратнă хĕр». Ноябрĕн 23-мĕшĕнче каçхине чăвашла спектакль «Юратнă хĕр».
Кăнтăрлахи спектакль 12 сехетре, каçхине—19 сехет те 30 минутра пуçланать
ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔНЧЕ — ноябрĕн 22-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Цитадель славы».
ФИЛАРМОНИ ЗАЛĔНЧЕ—ноябрĕн 22-мĕшĕнче филармони солисчĕсен концерчĕ. Концерт 20 сехетре пуçланать.
КИНО
«УДАРНИК»—ноябрĕн 22-мĕшĕнче çĕнĕ илемлĕ фильм-спектакль «Враги».
16 сехет те 15 минутра тата 20 сехет те 15 минутра пуçланакан сеанссенче—пĕрремĕш сери, 18 сехет те 15 минутра тата 22 сехет те 15 минутра пуçланакан сеанссенче—иккĕмĕш сери.
Ноябрĕн 23-мĕшĕнчен пуçласа çĕнĕ илемлĕ фильм «Серебристая пыль».
Сеанссем яланхи вăхăтрах пуçланаççĕ.
«ЭЛЕКТРИК» КЛУБРА—ноябрĕн 22-мĕшĕнче фильм-спектакль «Враги» (пĕрремĕш тата иккĕмĕш сери).

Хаçат-журнал çырăнса илĕр!
Шупашкарта пичетленсе тухакан çак хаçатсемпе журналсене 1954 çулта илсе тăма пур гражданинсем те çырăнса илме пултараççĕ:
„Коммунизм ялавĕ“, „Советская Чувашия“, „Молодой коммунист“, „Çамрăк коммунист“, „Агитатор блокночĕ“ (вырăсла тата чăвашла), „Ялав“ журнал, „Тăван Атăл“ альманах.
Уйрăм çынсем «Союзпичет» уйрăмĕсенче тата почтăсенче çырăнса илме пултараççĕ. Çавăн пекех письмоносецсем гражданинсен килĕсенче, хаçат-журнал сарма уйăрнă çынсем фабрикăсемпе заводсенче, учреждениесенче, шкулсенче, колхозсемпе МТС-сенче подписка йышăнаççĕ.
Предприятисен, организацисен, шкулсен, культпросвет учрежденийĕсен, колхозсемпе МТС-сен службăра усă курма тата пĕрле вуламалли вырăнсенче усă курма хаçатсемпе журналсем «Союзпичетĕн» районсемпе хуласенчи уйрăмĕсенче çырăнса илмелле.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—4-17, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—13-37, парти пурнăç пайĕ—3-90, обзорсен пайĕ—6-84, пропаганда пайĕ—5-21, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—3-54, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.
НТ 09387. Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР. Заказ № 2757. Тираж 20,000 экз.